Чебоксарская
... Горького
0

[illegible] 10 пус. 19-мĕш çул тухать.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937
ДЕКАБĔР
16
КĔÇНЕРНИКУН
288 (4800)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Халăх хушшинчи вăй

Аслă Совет суйлавĕ социалисăм çĕршывĕнчи халăхăн политикăлă хастарлăхĕпе организациленĕ питĕ çӳле вырăнта тăнине кăтартрĕ. Суйлава активлăн хутшăнса суйлавçăсенчен (суйлава 96,5 процент хутшăнни урăх нихăш государствăра та, нихăçан та, нихăш суйлавра та пулман), совет халăхĕ пĕтĕм тĕнче умĕнче хăйен вăйлăватне, вăл коммуниссен партине йуратнине, ăна шаннине, коммуниссен партипе совет правителстви тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем йенĕпе те, хамăр çĕршыври пурнăç ыйтăвĕсем йенĕпе те тытса пыракан политикăна тĕрĕс тесе йышăннине кăтартрĕ. Халăх партипе правителствă политикине ырларĕ, уншăн сасăларĕ.

Совет халăхĕ çурçулталăк хушши Сталинла Конституци пройектне сӳтсе-йаврĕ. Унтан, Пĕтĕм Сойузри Советсен Чрезвычайла VIII-ы сйес Сталинла Конституцине çирĕплетсе йышăннă хыççăн, Аслă Совет суйлавне тата тепĕр çулталăк хушши вăхăт хатĕрленчĕ. Çак тапхăр витĕр епĕр пĕр паллă йĕр выртнине куратпăр,—ăна епĕр халăх хушшинчи политикăла хастарлăх теспĕр. Халăх хушшинчен çĕнĕ вăйсем тухса çĕршывăн политикăлă пурнăçне хутшăнчĕç. Çак хастарлăхăн хумĕ уйрăмăнах Парти Тĕпкомĕн историне февраљ-мартри пленумĕ йатпа кĕрсе йулнă пленумран пуçласа тарăнăш йенĕпе те, анлăх йенĕпе те тата та ытларах сарăлса, вăйланса, Аслă Совет суйлавне халăх 90.319.346 çын хутшăннипе вĕçленчĕ. Хăçан, хăш государствăра, мĕнле парти тăхăрвунă мĕлйун ытларах сасă илни пулнă? Ун пеккинĕ истори пĕлмест. Социалисăм çĕнтерĕвĕ анчах массăн политикăла хастарлăхне çакăн пек вăйлатма пултарат. Çăннипех те пирĕн совет халăхĕ хушшинче пултарулăх вăйĕ вĕресе тăрат.

Сталинла Конституципе суйлав саккунĕ çинчен халăха вĕрентес ĕçе хутшăнса çĕнĕ стройшăн,—социалисăмла совет стройĕшĕн кĕрешкенсемпе вĕрентекенсем мĕн чухлĕ тухрĕç халăх хушшинчен! Мĕн чухлĕ стахановецсем, ударниксем ӳссе çитĕнчĕç социалисăмла промышленнăçпа социалисăмла йалхуçалăхĕнче ĕçлекенсем хушшинчен! Мĕн чухлĕ агитаторсем, пропагандиссем тухрĕç халăх хушшинчен! Пионертан пуçласа 80—90 çулхи ватăсене çити агитацилерĕç пирĕн кандидатсемшĕн!

Аслă Совет суйлавне хатĕрленсе иртерес хĕрӳлĕ ĕç пынă йулашки икĕ уйăх хушшинче кăна çĕршерĕн, пиншерĕн агитаторсем, çĕршерĕн, пиншерĕн доверенăйсем—Сталинла Конституципе суйлав саккунĕ çинчен ăнлантаракансем, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем çинчен агитацилекенсем ӳссе тухрĕç халăх хушшинчен. Пирĕн пайанхи задач çак вăйа социалисăм строителствин малашнехи çĕнтерĕвĕсем валљи мобилизацилесси пулат. Çак вăйа пирĕн Сталин вĕрентнĕ пек пăхса çитĕнтерес пулат. Çак вăйа—хамăрăн актива, хамăрăн пур ĕçсем валљи те хатĕрлемели кадрсем пулăкан вăйа—практикăла ĕçре тĕрентмеле. Ăна органзацилемеле. Апла пулсан пирĕн çакăнта хамăрăн пĕтем партипе совет, комсомолпа профсоюзсен вăйне хурас пулат. Çапла ĕçлесен анчах епĕр халљхинчен тата пысăкрах çĕнтерӳсем, халљхинчен тата пысăкрах çитĕвӳсем тума пултаратпăр.

Суйлавçăсен ĕçĕсем суйлавсем иртнипе пĕтмеççе,—терĕ Сталин йултăш хăйĕн суйлав умĕн каланă сăмахĕнче.—Вĕсен, суйлавçăсен ĕçĕсем „халљ суйласа лартнă Асла. Советăн пĕтĕм тапхăрне пыраççĕ. Çуйлавçăсен, хăйсен депутачĕсем тĕрĕс çул çинчен пăрансан вĕсене срукченĕх чĕнсе илме права паракан саккун çинчен епĕ каларăм енте. Апла пулсан, суйлавçăсен обйазаннаçĕпе прави çакăнта пулат: вĕсем хăйсен депутачĕсене пермайах контроља туса пыччăр, вĕсене тем пулсан та политикăла обывателсен картне кайса лармала марри çинчен ӳкĕтлетчĕр, вĕсем—суйлавçăсем хăйсен депутачĕсене аслă Ленин пек пулма вĕрентсе тăчăр" (Сталин).

Çакăнтан ĕнтĕ пĕтĕм пысăккăшпе советсен ĕçне вăйлатса йарасси тухса тăрат. Аслă Совет суйлавне хатĕрленсе иртернĕ тапхăр та çĕкленнĕ актива халĕ советсен йышлă секцисем урлă политикăлă массăлă ĕçе анлăн хутшăнтармала. Çак актив çине тайанса, советсен хăйсен пĕтĕм ĕçне, çăннипех, çĕнетсе йамала. Апла пулсан, советсен çак актива организацилемеле.

Пирĕн чылай колхозсем Аслă Совет суйлавне çитес çуракине хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илчĕç. Анчах çав вăхăтрах пирĕн çураки çинчен тĕлленмен колхозсем те сахал мар-ха. Пирĕн задач—халăх хушшинчи актив çине тайанса çуракине хатĕрленес ĕçе халех вирлĕн сарса йарасси пулат.

Пирĕн чылай колхозсенче тырпулсемпе тупăшсене валеçсе пĕтернĕ. Колхозниксем стахановла çулăн стахановла ĕç çимĕçĕпе савăнса пурăнаççĕ. Анчах çав вăхăтрах, тупăшсемпе тырпулсене валеçес йенĕпе хыпалансах кайман колхозсем те пур. Пирĕн задач—халăх хушшинчи актив çине тайанса çак ĕçе нумайа йамасăр вĕçлесе çитересси пулат.

Парти Обкомĕн йулашки пленумĕ финанс ĕçĕ çинчен ыйтăва çирĕппĕн лартрĕ. Калас пулат, чылай райĕçтăвкомсем ку тĕлĕшпе вырăнтан та хускалман. Хуçалăхлă-политикăлă ытти ĕçсем пирки те çакнах калама тивет.

Халăх хушшинче политикăлă хастарлăх пысăк. Йулашки вăхăтсенче парти, совет, комсомол, профсойуз т. ыт. организацисен руководствине айалтан çĕнĕ вăйсем йышлăн хутшăнчĕç. Халăх хушшинчен çĕнĕ актив, партире тăраканнисемпе партире тăманнисен активĕ ӳссе тĕрекленчĕ. Çак пĕтĕм вăйсене организацилес пулат, çĕнĕ вăйсемпе çĕнĕ çĕнтерӳсемшĕн кĕрешĕве тухас пулат.

Халăх хăй телейĕшĕн сасăларĕ

КӲКЕÇ. Декабĕрĕн 12-мĕшĕ. Каç пулчĕ. Поçолок суйлав участки çуртĕнчен халăх татăлма пĕлмест. Канмали пӳлĕмре халăх тĕрлĕрен хаçат-журналсем вулат, шашкăла, шахмăтла, биллиардла выљаççĕ. Икĕ ĕретлĕ хуткупăс илемлĕ кĕвĕсем калат.

Радио Мускавран çĕнĕ хыпарсем: декабĕрĕн 12-мĕшĕнче Совет Сойузĕнчи пĕтĕм халăх ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали куна калама çук пысăк çĕкленӳпе, чаплă праçник пек кĕтсе илни çинчев; Владивостокран Минска çити, Мурманскран Тбилисине çити, Парлă океан çыранĕсенчен Вăтам Азири хĕвел пĕçертекен пушхирсене çити,—Совет çĕршывĕн территоринче Совет гражданинĕсем, вĕсем мĕнле расăран, чĕлхерен тата нациољӑçрен тăнине пăхмасăрах, çав кун пурте пĕр туйăмпа, пысăк хаваслăхпа пурăнни çинчен пĕлтерет.

Тулта уйăх çути çутатат. Вăхăт 12 сехет. Лăп 12 сехетре суйлав йешчĕкĕсем тăракан тата суйлав комиççи ĕçлекен пӳлĕмĕн алăкĕсем хупăнаççĕ. Суйлав комиççин председателе Миронов йулташ сасăласси пĕтни çинчен пĕлтерат.

Çурçĕр иртсе пĕрремĕш сехет. Суйлав комиççи членĕсем, общеçтвăлă организацисен тата пичет представителĕсем сасăланин резуљтатне пĕлме хатĕрленеççĕ. Йулнă бӳллетенсемпе конвертсене пĕр çĕре çыхса, пичетлесе лартаççĕ. Участкăри суйлав комиççин председателĕ суйлав йешчĕкне уçат те, вĕсенчен конвертсене сĕтел çине кăларма тытăнат. Çакăн хыççăн вăл суйлава миçе çын хутшăннипе миçе конверт пуррине танлаштарса пăхат. Участкăра 507 суйлавçă сасалана, 507 конверт.

Йулашкинчен Миронов йулташ пĕрремĕш конверта уçат те бӳллетенсем çине тинкерсе пăхат.

Шурă бӳллетен...

— Андрейева.

Кăвак бӳллетен..

— Чкалов.

Çут-симĕс бӳллетен...

— Сахйанова,—пĕлтерет суйлав комиççи председателĕ. Комиççин секретарĕ тата суйлав комиççин членĕсем председател кашни пĕлтермесрен „да" ответлеççĕ, шут листисем çинче паллă тăваççĕ.

Поçолок çывăрат. Култура çуртĕнче пĕр суйлав комиççи кăна хăйĕн ответлă ĕçне туса ларат. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнчи пур ĕççыннисемшĕн историлĕ кун, чаплă кун пулса тăнă. Çав кун пĕтĕм ĕççыннисем бољшевикла парти, Совет влаçĕ, Аслă Сталин тавра таччăн пĕтĕçсе тăнине питĕ аван кăтартса парат. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче каçхине участкăри суйлав комиççийĕ çав нихăçан манмала мар кунăн резуљтатне итоглат.

Ирхине 8 сехет тĕлне участкăри суйлав комиççи хăйĕн ĕçне пĕтерет, комиççи итогсене Округри суйлав комиççине пĕлтерме васкат. Участкăри суйлав комиççи коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем суйланни çинчен пĕлтерме васкат.

Калинин.

Ватă колхозницăн савăнăçĕ

Ирина Павловна Калинин йачĕпе тăракан колхозри 67 çула çитнĕ колхозницă. Кăçал вăл ватă пулсан та 94 ĕçкунĕ тунă.

— Халĕ хама ватă тесе шутламастăп. Çак савăнăçлă пурнăçра ĕçлес килет, нумай пурăнас килет. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче хамăн ĕмĕрте пулман савăнăç пулчĕ. Вăл кун хамăр йалтанах çĕршывăн чи лайăх ывăлĕ-хĕрĕсене Цыганова, Чкалов, Иванов йулташсене тӳррех Мускава Аслă Совета суйларăмăр. Хамăр суйланă кандидатурăсене, вĕсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен епĕр тĕплĕн пĕлсе тăратпăр. Епĕ çамрăках мар ĕнтĕ. Епĕ ĕлĕк суйлавсем мĕнле иртнине, камсене суйланине вуçĕх пĕлмен. Ĕлĕкхи асаплă пурнăç çинчен аса та илес килмест.

Епĕ халљхи савăнăçлă пурнăçшăн, тата пайан суйлава хутшăнса çĕршывăн чи лайăх çыннисене Аслă Совета суйлама пултарнăшăн тем пек сăвăннине сăмахпа та каласа параймастăп,—тет вăл.

Ирина Павловна суйлава лашапа, хыçлă çунапа хĕрлĕ хăмач йалав çакса пынă.

В. Вишневский.

Суйлав кунĕ Шупашкарти 11-мĕш суйлав участкинче.
А. Сушкова—60 çулта (сулахайра) тата С. Бессонова—58 çулта, суйлав бӳллетенĕсене чикнĕ конвертсене суйлав йешчĕкне йараççĕ.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

ССР Сойузĕнчи тата ытти çĕршывсенчи суйлавсен цифрăлă материалĕсем

ССР Сойузĕн Аслă Совет çуйлавĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ чаплă çĕнтерӳ турĕ. Суйлав кунĕ, Сталин йулташ каланă пек, чăннипех пĕтĕм халăх праçникĕ пулса тăчĕ.

Аслă Совет суйлавĕ пурне те тивĕç, пĕртан тата тӳрех суйламали правапа вăрттăн сасăланă никĕс çинче пулса иртрĕ. Сталинла Конституци, капиталисăмлă çĕршывсенчи конституцисем пек мар, çынсем арçын-хĕрарăмне, мĕнле расăпа нациољӑçне, мĕн чухлĕ вĕреннине, пурлăхĕ мĕнлине, мĕнле социаллă сийрен тухнине т. ыт. пăхса суйлав правине пӳлмест. 18 çула çитнĕ çынсем Совет Сойузĕнче пурте суйлав правипе усă кураççĕ. Кун пекки вăл ытти çĕршывсенче пĕринче те çук. Германире суйлав правипе (буржуалă конституци вăхăтĕнче) 20 çула çитнисем, Англире—21 çула çитнисем, Францире—21 çула çитнисем çеç (арçынсем анчах) усă курнă.

Пирĕн çĕршывра суйлавçăсем питĕ нумай. Аслă Совет суйлавĕнче сасăлама права пуррисене 93.639.478 çын регистрациленĕ. Совет гражданĕсем 1937 çулхи декаберĕн 12-мĕшĕнче хăйсен суйлав прависемпе пĕтĕмешпех усă курнă. Нихăçан та, нимĕнле капиталисăмлă çĕршывра та халăх суйлавра совет халăхĕ декаберĕн 12-мĕшĕнче кăтартнă пек пысăк активлăх кăтартман. Малтанах шутлама пултарнă цифрăсенчен иртсе кайнă. Икĕ материк çине вырнаçнă, çĕр чăмăрĕн улттăмĕш пайне йышăнакан çĕршыв бољшевикла организацилĕхĕн тата политикăн çӳлĕ класне кăтартрĕ.

Цифрăсене сăмах парăпăр. Айалта епĕр Англири, Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи, Германири, Йапонири, Полљшăри йулашки çулсенчи суйлавсем çинчен, çавнашкалах тата ССР Сойузĕнчи 1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пулса иртнĕ суйлав çинчен калакан цифрăсене илсе, кăтартатпăр (капиталисăмлă çĕршывсенчи цифрăсене буржуалă источниксенчен илнĕ).

Капиталисăмлă çĕршывсенчи тата ССР Сойузĕнчи суйлавсем

Çĕршывсем	Суйлав пулса иртнĕ вăхăт	Халăх	Суйлавçăсем		Сасăланă	
			Суйлавçăсен хисепĕ	Халăх хисепĕнчен процентпа	Суйлавçăсен хисепĕ	Суйлавçăсен хисепĕнчен процентпа
Англи	Парламент суйлавĕ 1935 ç.	44.937.444	30.562.774	68,1	22.001.837	71,9
Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем	Президент суйлавĕ 1936 ç.	128.429.000	55.000.000	42,8	45.812.155	83,3
Франци	Парламент суйлавĕ 1936 ç.	41.905.968	11.768.491	28,2	9.938.058	83,9
Германи	Фашисла диктатурăччен рейхстаг суйлавĕ 1932 ç.	62.410.600	44.373.700	71,2	35.759.100	80,6
Йапони	Парламент суйлавĕ 1937 ç.	69.251.265	14.618.298	21,1	10.204.127	69,9
Полљшă	Сейм суйлавĕ 1935 ç.	33.400.000	16.282.347	48,8	7.576.686	46,6
ССР Сойузĕ	1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕшĕ	169.000.000	93.639.478	55,4	90.319.346	96,5

Мĕн çинчен калаççĕ ку цифрăсем?

Пирĕн тăван çĕршыв, халăх хисепĕ йенчен, таблицăра кăтартнă ытти çĕршывсенчен чылай иртет. ССР Сойузĕнче халăх Йапониринчен лăп та шай 100 мĕлйун ытларах. Йапонире пĕтĕм халăх 69,2 мĕлйун çын; Германире—62,4 мĕлйун çын, ССР Сойузĕнче—169 мĕлйун халăх! Суйлавçăсем пирĕн çĕршывра 93,6 мĕлйун çын. Урăхла каласан, пирĕн суйлавçăсем кăна Германири пĕтĕм халăхран 1,5 хут ытларах тата Йапонири пĕтĕм халăхран 1,5 хута йахăн ытларах.

Германипе Англире суйлавçăсен хисепĕ халăх хисепĕ йенĕпе илсе танлаштарсан пысăкрах пек тухат. Анчах вăл пĕре те унта суйлав саккунĕн демократисăмĕ вăйлине пĕлтермест. Вăл акă мĕнрен килет: Англире те, Германире те çамрăксемпе ачасен процентĕ питĕ пĕчĕккĕ. Ку çĕршывсенче халăх çураласси, уйрăмăнах вăрçă хыççăн, питĕ хытă чакнă. 1910 çулта Германире 20 çула çитмен çамрăксемпе ачасем 25.160 пин çын (пĕтĕм халăхран 43,5 процент) пулнă; 1933 çулта 20 çула çитмен ачасемпе çамрăксем Германире 18.037 пин çын (28,8 процент) çеç йулнă. Кашнийех курат, çамрăксен хисепне кăтартакан цифрăсем Германире чакаççĕ.

Пирĕн çĕршывра, ĕççĕрлĕхпе чухăнлăха пĕтернĕ çĕршывра, йалтах урăхла, халăх нихăçанхи пек те мар хăвăрт ӳсет. Епĕр—çамрăк, хăвăрт ӳсекен, аслă çĕршыв.

Декабĕрĕн 12-мĕшĕ—Аслă Совет суйлавĕ питĕ пысăк активлăхпа иртнине кăтартрĕ. 90,3 мĕлйун çын, йе 96,5 процент суйлавçă сасăланă. Нимĕнле капиталисăмлă çĕршывра та Совет Сойузĕнче декабĕрĕн 12-мĕшĕнче суйлава халăх нумай тухнă пек тухни пулман. Англире 1935 çулхи парламент суйлавĕнче сасăланă çĕре суйлавçăсен 71,9 проценчĕ çеç хутшăннă. Францире 1936 çулти парламент суйлавĕ уйрăмăнах хастарлă иртнĕ, анчах апла пулсан та, суйлавçăсем суйлава 83,9 процента кăна хутшăннă. Полљшăра 33 мĕлйун халăх хушшинче суйлавçăсем 16,2 мĕлйун çын, суйлава пурĕ те 7,5 мĕлйун çын хутшăннă, йе пĕтĕм суйлавçăсенчен суйлава çурри те хутшăнман. Пĕр Украинă СС Республикĕнче кăна 17 мĕлйун ытла суйлавçă, йе Полљшăра шутланакан пĕтĕм суйлавçăсенчен ытларах сасăланă. Совет Сойузĕнчи пек политикăна çакăн пек сасă хисепĕпе ырланă правителствă тĕнчере урăх çук.

Сталинла Конституци тăрăх суйланă пĕрремĕш суйлав чăннипех пĕтĕм халăх праçникĕ пулса тăчĕ. Кашни гражданин хăйĕн тивĕçне тăван çĕршыв умĕнче пурнăçа кĕртессине чыс вырăнне хунă. Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ вăл—никам çĕмĕрейми пысăк вăй. Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ никам çĕнтерейми хăватлă. Ăна фашисла вăрçă пуçаракан тата вĕсен троцкисла-бухаринла сутăнчăксен тискер ĕçĕсем те хăрушă мар.

Декабĕрĕн 12-мĕшĕ—пирĕн çĕршыв вăйхăвачĕн, совет халăхĕ бољшевикла партине тата унăн аслă çулпуçне Сталин йулташа вĕçĕмсĕр йуратнин аслă демонстрацийĕ.

Ненец-колхозниксем телейлĕ пурнăçшăн сасăларĕç

АРХАНГЕЉСК, 14/XII. (ТАСС). Ненецсен нацилĕ округĕнче пурăнакансем ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче калама çук активлă пулчĕç. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче суйлавçăсем, хăйсен сасĕсене коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пама, суйлав участкисене йĕлтĕрсемпе, çуран тата плансемпе пынă.

Нарйан—Марти 1-мĕш номĕрлĕ суйлав участкинче никамран малтан ненка-пенсионерка Анастасийа Илйинична Вылка, ун хыççăн унăн хĕрĕ Клавдийа сасăланă. Клавдийа кăçал пуçласа суйлава хутшăннă.

Анастасийа Илйинична çемйи—телейлĕ те хаваслă пурнăçа Октябĕр революцийĕ хыççăн тин курнă,—ненецсен çемйисем пурте ĕнтĕ çавах. Унăн аслă хĕрĕ перекет кассинче контрољор пулса ĕçлет, тепĕр хĕрĕ Ленинградри институтра вĕренет, ывăлĕ Хĕрлĕ çарта службăра.

Сенйага участкинче суйлавçăсем хушшинче културлă ĕçсем тăвассине лайăх организациленĕ. Кунта художествăлă пултарулăх бригади ĕçленĕ. Суйлава пынă ненецсем-охотниксем, ваттисем те, çамрăккисем те, бригадăпа пĕрле хăйсен йуррисене йурланă. Бригадă халăх социалисăм çĕршывĕнчи телейлĕ пурнăç çинчен хывнă çĕнĕ йурăсене çырса илнĕ. Çав йурăсенчен пĕрне 50 çулхи ненкă-колхозницă хывнă.

Охотниксем тата выљăх ĕрчетекенсем Аслă Совет суйлавне ĕçре пысăк çитĕнӳсем туса кĕтсе илнĕ. Çак çулхи тăваттăмĕш кварталта хаклă тирсем хатĕрлемели плана охотниксем икĕ хут тултарнă.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Йапонцăсем Нанкин çине атакă тума пуçланă. Хулаљ кăнтăр йенчи пайĕнче йапонцăсем снарйадсемпе ерсе хула стенин пĕр пайне шĕлтернĕ. Йапони çарĕсем хулана пырса кĕме тăрăшаççĕ, вĕсен атакисене Китай çарĕсем ăнăçлăн сирĕ-сире пăрахаççĕ. Йапонцăсем сухатусем нумай тӳсеççĕ.

(ТАСС).

Итали Лига нацинчен тухнă

Римран пĕлтернĕ тăрăх, Итали Лига нацичен тухнă.

Йевропăри пичет: Итали правителстви тахçанах Лига нацинчен тухасшăн пулнă, вăл ку тĕлĕшпе йышăннă решени ĕçре мĕн пуррине пурне те пĕлтерсе йышăнни çеç пулат, тесе çырат. Итали 1936 çулхи май уйăхĕнченпе Лига нацин заседанисене хутшăнманнине пурте пĕлеççĕ.

Францире: Итали Лига нацинчен тухни Йевропăра вăрçă чĕртес çулпа малала утăм туни пулат, тесе шухăшлаççĕ.

Испанин оборонă министрĕ Прието, Итали Лига нацинчен тухни пирки каласа, çапла пĕлтернĕ: „Муссолини, Испани тĕлĕшпе хăйĕн шухăшĕсене пурнăçа кӳртме алăсем ирĕклĕ пулччăр тесе, Лига нацинчен пачах уйăрăлат,—вăл Испанийе вăрçă плацдармĕ, çĕнĕрен империалисăмла аванӳурăсем тăвасшăн çунинчен тухса тăракан анлăрах плансене пурнăçа кĕртмели плацдарм, туса хурасшăн", тенĕ.

(ТАСС).

Тĕп Суйлав Комиççийĕ ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕн пĕтĕмĕшлĕ итогĕсем çинчен пĕлтерни

Округсенчи суйлав комиççийĕсем пĕлтернĕ тăрăх, 1937 çулхи декабĕрĕн 14-мĕшĕнче, çĕрле 12 сехет тĕлне, ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕсене пурне те— 1.143 депутат суйланине регистрациленĕ. Суйланă депутатсем пурте коммунистсемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем.

Сасăлама хутшăннă суйлавçăсен хисепне, тĕпрен илсен, шутласа тухнă, чи инçетри пĕчĕк суйлав участкисем анчах шутласа тухнă хисепе кĕреймен-ха, вĕсен сведенийĕсем сасăланисен хисепне кăштах ÿстерме пултараççĕ. ССР Сойузĕ тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче сасă прави пуррисене 93.639 пин те 478 çын регистрациленĕ. Суйлав округĕнсенчен пĕлтернĕ тăрăх, суйлавçăсен çав хисепĕнчен сасăлама 90.319.346 çын хутшăннă, вăл сасă правипе усă куракан граждансен пĕтĕм хисепĕнчен 96,5 процент пулать.

РСФСР тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче сасă прави пур 60.351.656 çынран сасăлама 58.257.245 çын хутшăннă, вăл сасă правипе усă куракан граждансен пĕтĕм хисепĕнчен 96,5 процент пулать.

Украинă ССР тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче сасă прави пур 17.530.751 çынран сасăлама 17.098.100 çын хутшăннă, вăл сасă правипе усă куракан граждансен пĕтĕм хисепĕнчен 97,5 процент пулать.

Белорус ССР тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче сасă прави пур 3.007.342 çынран сасăлама 2.926.772 çын хутшăннă, вăл сасă правипе усă куракан граждансен пĕтĕм хисепĕнчен 97,3 процент пулать.

Азербайджан ССР тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче сасă прави пур 1.648.653 çынран сасăлама 1.574.792 çын хутшăннă, вăл сасă правипе усă куракан граждансен пĕтĕм хисепĕнчен 95,5 процент пулать.

Грузин ССР тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче сасă прави пур 1.940.547 çынран сасăлама 1.861.175 çын хутшăннă, вăл сасă правипе усă куракан граждансен пĕтĕм хисепĕнчен 95,9 процент пулать.

Армйан ССР тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче сасă прави пур 620.220 çынран сасăлама 590.641 çын хутшăннă, вăл сасă правипе усă куракан граждансен пĕтĕм хисепĕнчен 95,2 процент пулать.

Туркмен ССР тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче сасă прави пур 652.515 çынран сасăлама 621.847 çын хутшăннă, вăл сасă правипе усă куракан граждансен пĕтĕм хисепĕнчен 95,3 процент пулать.

Узбек ССР тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче сасă прави пур 3.548.441 çынран сасăлама 3.316.481 çын хутшăннă, вăл сасă правипе усă куракан граждансен пĕтĕм хисепĕнчен 93,5 процент пулать.

Таджик ССР тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче сасă прави пур 751.798 çынран сасăлама 710.871 çын хутшăннă, вăл сасă правипе усă куракан граждансен пĕтĕм хисепĕнчен 94,6 процент пулать.

Казах ССР тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче сасă прави пур 2.788.147 çынран сасăлама 2.616.776 çын хутшăннă, вăл сасă правипе усă куракан граждансен пĕтĕм хисепĕнчен 93,9 процент пулать.

Киргиз ССР тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче сасă прави пур 799.408 çынран сасăлама 744.647 çын хутшăннă, вăл сасă правипе усă куракан граждансен пĕтĕм хисепĕнчен 93,1 процент пулать.

Суйланă 1.143 депутатран—коммунистсем 855, партире тăманнисем 288. Депутатсен хисепĕнче—хĕрарăмсем—184, арçынсем—959.

ССР СОЙУЗĔН АСЛĂ СОВЕТ СУЙЛАВНЕ ИРТЕРЕС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН ТĔП СУЙЛАВ КОМИÇÇИ.

Çамрăк суйлавçăсем

Виçĕ çамрăк цехран тухрĕç те, тÿрех комбинат поçолкинеле çул тытрĕç. Çменăран тин çеç тухвăскерсем, пĕр-пĕрин ĕçĕсем çинчен калаçма пуçларĕç. Пономарйов йулташ хăйĕн ĕçĕнчи тата пысăк çитĕнÿ туни çинчен каласа парчĕ. Унан сăмахĕ ыттисене шухăша йачĕ.

— Мĕнле-ха, çынсем çитĕнÿсем тăваççĕ? Епĕ лайăхрах ĕçлеме пултараймастăп-и вара?—терĕ çумра утса пыракан Куртовский йулташ.

— Нормăна 300 процент кăна мар, 500—600 процент та тултарма пулать. Кунта ĕç техникине пĕлни тата тăрăшса ĕçлени çеç кирлĕ, кирлĕ таран материалсем паччăр,— терĕ Пономарйов йулташ Куртовский сăмахне пÿлсе.

Сăмах малала чăсăлчĕ. Николайев та хăй ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ. Унтан вĕсем Аслă Совета суйламали Положени çинчен пĕрпĕрне ыйтусем парса, ăнланман вырăнсене ăнлантарчĕç.

Виççĕшĕ те пĕр-пекех вĕсем: 19 çулта. Кăçалхи çул пĕрремĕш хут суйлава хутшăнаççĕ. Çак пысăк тивлетшĕн тулли кăмăлпа савăнаççĕ. Вĕсен сăмахĕнче йаланах телейлĕ, савăнăçлă пурнăçăн сăн-сăпачĕ курăнать. Чăнах та вĕт, йепле пысăк правасемпе усă кураççĕ вĕсем. Йепле кăмăл çекленмĕ.

Григорий Пономарйов 1935 çулччен Сантăк çырми йалĕнчен ниçтах та тухса курман. Хула пурнăçне кĕнекесем тăрăх çеç пĕлнĕ. 1935 çулта Çĕмĕрле комбиначĕ çумĕнчи фабрик-завод шкулне вĕренме кĕрсен çеç рабочисен пурнăçне хăй куçĕпе курнă. Акă халь хăй те рабочи. Иртнĕ çулта фабрик-завод шкулне вĕренсе пĕтерсе, стольарнăй цеха ĕçлеме куçнă. Халĕ те çавăнтах ĕçлет. Унăн ĕçне пăхсан, чăнах та йавăр ĕç тейĕс çук. Анчах çапах та ответлă та, тивĕçлĕ ĕç. Вăл шкаф уççисене, хăлăпĕсене (аврисене) лартать. Малтанхи вăхăтрах ĕçе хăвăхса çитеччен пит те йавăр пулнă ку вырăнта ĕçлеме. Пономарйов йулташ нормăна та тултарайман. Акă халĕ уншăн ĕç чăнах та çăмăл, çавăнпа вăл пĕр брак тумасăр кашни кулленхи ĕç нормине 200 проц. кайа мар тултарать.

— Ĕçĕн пĕтĕм секречĕ те кунта çавранулăхра çеç. Алсене хыта выльатмала, тÿрĕ тытмала. Шăтармали йапаласем çивĕч, хăйне виçелĕ пулмала. Виçене тĕрĕс пĕлни те кирлĕ,—тет Пономарйов йулташĕсене.

Алексей Куртовский те Пономарйовпа перлех фабрик-завод шкулĕнчен вĕренсе тухсан, стольарнăй цеха куçнă. Производствăра çулталăк çеç ĕçлет. Малтанхи вăхăтрах ăна та нормăна тултарса ĕçлеме йавăртарах пулнă. Пана нормăна та тултарайман. Халĕ шкаф колпакĕ çине бланкăсем çапнă çĕрте ĕçлесе, нормăна 200 процент тултарать.

Иван Николайев фабрик-завод шкулĕнчен 1935 çулта вĕренсе тухнă. Халĕ сĕтел рамкисем çумне окладкăсем хунă çĕрте ĕçлет. Нормă 40 штук тумала пулсан, Николайев 80 штук туса пырать.

Çак виçĕ çамрăк сталинла вунăкунлăха хутшăнса, хăйсем çине кашни кунхи плана 150 процентран кайа мар тултарса ĕçлеме обйазателствă илнĕччĕ.

Панă сăмаха ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Пономарйов йулташ вунăкунлăхра йаланах 200 проц тултарса пычĕ. Декабĕрĕн 8-мĕшĕнче 42 шт. усă лартса тата 773 шкаф алăк хăлăп лартмали шăтарса, 42 хăлăп туса пĕр кунхи нормăна 350 процент ытла тултарчĕ. Куртовскипе Николайев йулташсем те стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхĕнче пысăк çитĕнÿсем турĕç. Куртовскипе Пономарйов иккĕшĕ пĕр çуртра, пĕр хватерте пурăнаççĕ. Вĕсем таса, илемлĕ комнăтăра. Радио, балалайкă, тĕрлĕ кĕнекесем пур. Иккĕшĕ те комсомолецсем.

— Совет влаçĕ пире çамрăксене çав тери пысăк правасем пачĕ. Вĕренме те, ĕçлеме те услови пур. Спасибă Аслă Сталина,—терĕç вĕсем калаçура.

Чăнах та вĕт, йепле савăнас мар халĕ. Мĕн кирли пурте пур. Ĕçлесе илекен укçа ытлашшипех çитет. Акă Пономарйов йулташ иртнĕ çулсенче 200 тенкĕ ĕçлесе илнĕ пулсан, халĕ 336 тенкĕ ĕçлесе илет.

Николайевпа Пономарйов ĕçленĕ вăхăтрах каçхи вăтам шкула вĕренме çÿреççĕ. Калас пулать, вĕсем вĕренÿре те малта пыраççĕ. Ку та мар-ха, тата обшествăлă ĕçсенче те активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ.

Вĕсем суйлав урни патне пырса, хамăр округра палăртнă кандидатсене Чкалова, Новикова ССР Сойузĕн Аслă Совет депутата суйларĕç. Аслă Совет суйлавне ĕçре çитĕнÿ тунипе кĕтсе илчĕç вĕсем.

Çĕмĕрле.

Хар. Лисин.

Колхоза кĕреççĕ

★ Иккĕмĕш Хурашаш йалĕнче (Хĕрлĕ Чутай р.) ССРСойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленнĕ хушăра пурĕ 3 кил колхоза кĕме зайавленисем çырса пачĕç. Колхоза кĕрес текенсем ку йалта татах та пур.

Д. НЕГАЙЕВ.

★ Колхозсем кăçал халиччен пулман вăйлă тырпул туса илчĕç. Çав май колхозниксем чăн-чăн пуйан та культурлă пурăнма тытăнчĕç. Йăна халиччен колхоза кĕмесĕр тăнă йелиничниксем те аван кураççĕ. Çавăнпа халь Шĕмшеш йалĕнче (Хĕрлĕ Чутай р.) 5 хуçалăх колхоза кĕчĕç.

А. А.

★ Чăйкассинчи Калинин йачĕпе тăракан колхоз кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ. Колхозниксем темиçе çĕршер пăт тырă ĕçлесе илеççĕ, пуйан та культурлă пурăнаççĕ. Çавна кура халь Калинин йачĕпе тăракан колхоза икĕ хуçалăх кĕчĕç.

Ф. ДАНИЛОВ.

Пĕтĕм тĕнчери чи çурçĕрти „Çурçĕрти польус" польар станцинче хĕлкаçакан, виçĕ хутчен орденпа наградăланă Петр Петрович Ширшов — Днепропетровск облаçĕнчи Кировски суйлав округĕ тăрăх Сойуз Советне депутата суйланă.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: П. П. Ширшов хăйĕн Алик йатлă ывăлĕпе. (ÿкерчĕке 1937 çулхи март уйăхĕнче Çурçĕр польусне вĕçсе кайас умĕн Мускаври аэродромра ÿкернĕ). (Сойузфото).

Çĕнелнĕ çĕрĕн тухăçлăхĕ

Ĕлĕкхи вăхăтра пирĕн çĕр çинче гектартан 300 пăт тырпул туса илме пулать тесен, никам та ĕненмен, мĕншĕн тесен, ун чухне тырпул тухăçĕ деçатинран мĕн пурĕ те 30—35 пăт, лайăх çулсенче çеç 50 пăт таран пулнă. Колхозри стахановецсем—тырпул мастерĕсем тырпул тухăçне хăвăрт хăпартмали саккунсене шыраса тупрĕç. Начар çĕр шутĕнче тăракан уйсене ĕлĕкхинчен темиçе хут ытларах тыра паракан турĕç. Анчах пысăк тухăçлă тырпул туса илесси çăмăл ĕç мар вăл. Çакна йаланах асра тытса, пирĕн колхоз вăйлă тырпул тума пулăшакан агротехникăла ĕçсене çине тăрсах пурнăçа кĕртсе пычĕ. 1937 çулта пысăк тухăç илессишĕн кĕрешессине епĕр 1936 çулхи кĕркуннех пуçларăмăр. Кĕр сухине çентабĕрĕн 15-мĕш тĕлне 100 процентĕпех сухаласа пĕтернĕ. Ку ĕçе пит пысăк пахалăхпа турăмăр. Тăпран сухалакан сийне тарăнлатни тырпул тухăçне хăпартас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, епĕр кĕрсухине халиччен пек 10—12 сантиметр тарăнăшĕ мар, тракторпа 20—22 сантиметр тарăнăш сухаларăмăр. Рекордлă тырпул туса илме уйăрнă участкă çине кĕрсухи тăвас умĕн кашни гектар çине 20-шер тоннă çĕрĕк тăпри такрăмăр.

Çуркунне мĕн пур уйа суртласа аван тасатнă шултра вăрлăх акрăмăр. Çанталăк аван тăчĕ. Калчасем пурте пĕр харăс шăтса хăвăрт ÿсме тытăнчĕç. Калчасем хушшинче пĕр çумкурăкĕ те ÿсме памарăмăр. Таран сухаланă уйра çумкурăкĕ те нумай пулмасть.

Çын çÿллĕшĕ ÿснĕ тырпул хушшинче иртсе çÿренĕ чух чун савă начĕ.

Кĕске вăхăтра, ним тăккаламасăр, пысăк пахалăхпа пухрăмăр вăйлă тырпула.

Ăмăртмала ĕçлерĕç колхозниксем. Стахановла ĕçленипе Ефремова Йевдокийа малти рете тухрĕ: вăл кунне 1000 кĕлте таран çыхса пычĕ.

Ыраш нихăçанхинчен пысăк тухăç туса илчĕ кăçал пирĕн колхоз. Ыраш „Авангард" гектартан вăтам шутпа 24,46 центнер, çурхи тулă—20,8 центнер, „Диппе" йатлă суртлă сĕлĕ—32,4 центнер тухрĕ.

Рекордлă тухăç илме уйăрнă 10 гектарлă участкă çинче кашни гектартан 50 центнер сĕлĕ тухрĕ.

Çитес çулта усăлакан Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма колхоз зайавкă пачĕ. Пирĕн колхоз выставкăра пулма права йлнине епĕр чи пысăк та чи чыслă ĕç шутлатпăр.

Пайанхи куна тунă çитĕнÿсемпе лăпланмасăр çитес çул тата пысăкрах тухăç илессишĕн тата хамăрăн çитĕнÿсене Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче кăтартма права илессишĕн мĕн пур вăйа хурса кĕрешетпĕр епĕр.

Бурмистров.

Йелчĕк р-чи „Çĕнĕ Ишчерйаково" колхоз председателĕ.

Колхозниксем каççерен радио итлеме пухăнаççĕ

Упири „Коминтерн" колхоз (Трак р.) нумай пулмасть хытă калакан радио-прийомник лартрĕ. Колхозниксем радио итлеме каççерен ушкăнпа пухăнаççĕ.

Час-часах вĕсем Мускавран „Коминтерн" станцине итленĕ чух:

— Ку пире вальлийĕх ĕнтĕ, пĕтĕмпех пирĕн сăмахсемпе калаçать. Станцийĕ те „Коминтерн", пирĕн колхоз та „Коминтерн",—теççĕ.

Иртнĕ ернере колхозниксем радиопа Мускавран Сталин йулташ сăмахне итлерĕç. Çĕршывра суйлав мĕнле иртсе пынине тимлĕн сăнаса пычĕç. Радио колхоза çĕнĕ сăн кÿртрĕ.

И. Матвейев.

Хут пĕлекен пулса çитрĕç

СĔНТĔРВĂРИ. Декабĕрĕн 1-шне районĕпе хут пĕлмен çынсенчен 174 çынна çитĕннисен шкулĕнчен вĕрентсе кăларчĕç. Уйрăмăнах Кĕчкей йалсоветĕнчен 14 çын, Çĕнĕ Сала йалсоветĕнчен 7 çын хут пĕлменнисен шкулĕнчен вĕренсе тухрĕç. Тата суйлав кунĕ тĕлне Йурткассинче 4 çын (учителĕ Артемйева), Ураковăра 9 çын (учителĕ Михайлов), Мĕшĕлте 12 çын (учителĕсем Русина, Степанова), çакăн пекех Иккĕмĕш Чурашра 8 çын, 1-мĕш Çĕнйалта 5 çын, Туппай Ĕçмĕлĕнче 3 çынна хут пĕлменнисен шкулĕнчен вĕрентсе кăларма хатĕрленеççĕ. Кунта асăннă йалсенчи хут вĕренеймесĕр йулнă çынсем кăçал кĕркунне пулнйаранпа нумайах вĕренчĕç. Вĕсем чылайĕшĕ çырма, шутлама, вулама аванах вĕренсе çитрĕç.

Çак вăхăтрах Упакасси йалсоветĕнче хут пĕлмен 36 çынна (вĕсене вĕрентме çирĕплетнĕ учител Гордейев), Шуркасси йалсоветĕнче—12 (учител Иванов) Чăрăшкассинче—6 (учител Илйин), Аслă Астакассинче—38 çын (учител Блинов), Турханкассинче—28 (учител Соколов) çак тарана çитсе те вĕсене вĕрентме тытăнман. Тата хут сахал пĕлекенсен шкулĕсем пур çĕрте те кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Районра хут сахал пĕлекенсем 1044 çын, ку шутран 223 çынна кăна вĕренĕве хутшăнтарнă. Кунашкал хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене вĕрентес ĕçре чăрмантарса пыни пулмала мар. Халех кашни йалсоветĕнчех хут пĕлменлĕхе пĕтерессине çине тăрса ĕçлекен йалсоветсемпе учителсенчĕн пример илсе ĕçлемеле.

В-ов.

Халăхшăн тÿрĕ кăмăлпа тăрăшăп

Халăх ирĕкĕпе, манăн суйлавçăсен ирĕкĕпе епĕ коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕнчен ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлантăм. Çак телейе мана пирĕн аслă коммунисла партипе унăн çулпуçĕ, Конституцине тăвакан, тăван, йуратнă Сталин туса пачĕç.

Сталин йулташăн: „депутатăн çакна пĕлме тивĕç: вăл халăх тарçи, Аслă Совета халăх йанă посланец унăн хăйне халăх пана наказ тăрăх тытмала" тесе каланă сăмахĕсене епĕ уйрăм туйăмпа вуласа хумханатăп.

Мана йепле пысăк та ответлă ĕç кĕтнине епĕ отлично ăнланатăп.

Манăн çул çинчĕ тĕл пулма пултаракан йавăрлăхсене епĕ пирĕн коммунисла парти пулăшнипе çĕнтерессине те пĕлетĕп. Манăн çул вăл—пире, ĕççыннисене, Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ йертсе пыракан çул, çав пирĕн аслă тăван çĕршыв телейĕшĕн кĕрешмели çулпа епĕ тÿрĕ, ниçта пăрăнмасăр, пĕр хумханмасăр кайатăп.

О. Леонова.

ССРС Аслă Советне депутата Мускаври Свердловский суйлав округĕ тăрăх суйланă.

Примерлă пиçмоносец

ШĂХАСАН. Йамашри пиçмоносец Сергейев Захар иккĕмĕш çул ĕçлет. Вăл хаçатсене подписчиксем патне вăхăтра тĕрĕс çитерет. Ĕçхресченĕ ене хаçат-журнал усси çинчен тĕплĕн каласа ăнлантарнă. Колхозниксем ун патĕнче çĕнĕрен çĕнĕ хаçат-журналсем çырăнса илеççĕ.

„Чăваш Коммунĕ" хаçата вăл çĕнĕ çул валли 97 екземпльар сарнă. Пĕтĕмпе халĕ вăл тĕрлерен хаçат-журналсем 2 300 тенкĕлĕх çыранарать. Хăйĕн ĕçĕпе Сергейев йулташ районри пиçмоносецсем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрать.

Ал. Иванов.

Комсомолецсен массинчен уйăрăлса кайнă

Нумай пулмасть, Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинчи (8-мĕш участкăра) комсомолецсен пухувĕ комсомол комитечĕн отчотне итлерĕ.

Строителствăри комсомол комитечĕ ийунь уйăхĕнчен вăра ĕçлет, унтанпа 6 уйăх иртнĕ. Строителствăра 102 комсомолец ĕçлет. Çак комсомолецсене комитет çитеĕксĕр йертсе пынă. Комсомол комитет членĕсем Йашина, Левицкий, Руденко участкăсенче комсоргсем пулса ĕçлеççĕ. Анчах та ку комсоргсем комитет членĕсем пулсан та, комсомол ĕçĕсене йапăхтарса йанă. Комсомолецсем хушшинче нимĕнле ĕç те туман. Политкружоксем 8-ш участкăсăр пуçне ытти участкăсенче ĕçлемен, ĕçлемеççĕ те. Çамрăксем хушшинче те нимĕнле ĕç те çук. Пĕр çамрăка та комсомола илмен. Комитет членĕ Левицкий комсомолецсене йаланах кирлĕ мар сăмахсемпе вăрçса вĕсене калаçма та ирĕк паман. Самокритикăна хĕссе пынă. Пухусенче сайра хутра çеç пулкалана. Октьабĕр уйăхĕнче пулса иртнĕ стахановла вунăкунлăхра социалисăмла ăмăртăва хирĕç тăнă „Халĕ социалисăмла ăмăртупа аппаланса лармали вăхăт мар, „штурм" тумала",—тенĕ. Ăнах çăмăл кавалери рейдне йертсе пыма уйăрна, анчах та вăл нимĕн те тумасть.

Çавăн пекех комитет членĕ Йашина (строителствă мастерĕ) пĕр ĕçе те йеркелĕ туни пулман. 81-ш километртра труба тунă çĕрте йанăш кăтартса ĕçлеттернĕ. Йашина комсомолецсенчен уйăрăлса кайнă. Политкружок ĕçне пĕтерсе лартнă. Кунпа пĕрлех комитет членĕ Руденко та комсомол организацинче нимĕн те тумасть. Ăна строителствăри участкăсенчи политкружоксенче пулса, вĕсене кăтартусем парса пыма хушнă, анчах та вăл ку ĕç çинчен шутламан та.

Комитет секретарĕ Безубиков йулташ хăй те комсомолецсенчен уйăрăлса кайнă.

П. Йаргуньжин.

Пĕр хушă шавланипе лăпланса ларнă

Вăрмар райфо пуçлăхĕ Йегоровнимле конкретлă улшăну та тăвайман. Мĕншĕн тесен, вĕсем финанс активĕпе, финсекцисемпе нимĕн те ĕçлемен. Çавăнпа та ĕнтĕ декабĕрĕн пĕрремĕш тĕлне Арапуç, Кивĕ-Вăрмар, Хуруй, Чубай йалсовечĕсенче зайом пухма уйăрнă çынсем, хăйсем те зайом укçине пĕр пус та тÿлемен пулнă.

Йегоров йулташ час-часах хăйĕн кабинетĕнче шут çинче шутласа ларать. Шутласа ывăнсан вăл ура çине тăрать те числинник листисене уçса пăхса вăрăммăн сывласа йарать: „4-мĕш квартăл пĕтесси инçе йулмарĕ, анчах финанс планне тултарасси инçе-ха..."

Декабĕрĕн 10-мĕш тĕлне районĕпе „4-мĕш квартăл планне 54,6 процент çеç тултарнă. Нимрен ытла зайомпа самообложени укçи пухасси йулса пырать. Зайом укçи пухас плана Çĕнĕ—Вĕренер йалсовечĕ 45,4, Пăвакасси йалсовечĕ—39,4, Кавал йалсовечĕ—35,5 процент çеç тултарнă.

— Кÿ йалсоветсем пирĕн малта пыраканнисем-ха, — тет Йегоров йулташ.

— Кайра пыракан йалсоветсем плана миçешер процент тултарнă, тесе ыйтсан:

— Нимĕн те тултарман,—тесе ответлет вăл.

Чăн та декабĕрĕн 10-мĕш тĕлне Чăрăш—Çырма, Арапуç, Урнар, Хуруй, Туçа, Пăртас йалсовечĕсем зайом укçи пухмапа пĕрех. Райфо инспекторĕсем Гаврилов, Алексейев, Пешчеров йулташсем йулса пыракан йалсоветсенче пулнă пулин те, плана тултарас ĕçре

Йегоров йулташ пĕр именмесĕрех:

— Пирĕн инспекторсем финанс активисĕсене нумайăшне паллаймаççĕ,—тет.

Паллах, массăсенчен татăлса кайса ĕçлесен финанс планне тултарма пулмасть. Вăрнар районĕнчи финанс работникĕсем Парти Чăваш Обкомĕн кăçал нойабĕр уйăхĕнче пулса иртнĕ пленумĕ финанс ыйтăвĕпе йышăннă решенийе пурнăçламаççĕ. Вĕсем пленум хыççăн канашлусем ирттернипе, пĕр хушă шавланипе лăпланса ларнă. Çавăнпа та ĕнтĕ район финанас планне тултарас ĕçре республикре чи кайри вырăнсенчен пĕринче хÿрере çапкаланса пырать.

Паллах, малашне финанс планне тултарас ĕçри кун пек сÿрĕклĕхе чăтма май çук. Районри партипе совет организацисем халех ку ĕçе тивĕçлĕ вăй мобилизацилесе 4-мĕш квартăл планне вăхăтра тултармаллах.

Ф. Çитта.

Чăвашпромсойузра ĕçлекен Коновалова йулташ суйлав бÿллетенĕсене суйлав йешчĕкне йарать (Шупашкарти 7-мĕш суйлав участки).

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Çĕнĕ строителствă

ЕЛĔК. Ваçкассинчи Илйич йачĕпе тăракан колхоз кăçал утарти пылхурчĕсен вĕллисене кÿртсе лартма омшаник, 40 лаша вырнаçмалăх вите, халь тата зерносушилкă туса лартрĕ.

Ив. Маркелов.

Фотографи

Кинотрестăн Шупашкарти Фотографине сăн ÿкерттерме кашни кун 25—30-шар çын пырать. Кăçалхи çул декабĕрĕн 10-мĕш тĕлне 8269 сăнÿкерчĕксем ÿкерсе панă.

Фотографи заказсене нумай тытса тăмасть. Документсем çине çыпăçтармали пĕчĕк ÿкерчĕксене вăл пĕр кунтах туса парать. Пысăкрах сăнÿкерчĕксене 5—10 кун хушшинче туса хатĕрлет.

Сăнÿкерчĕксем пахалăх йенчен питĕ аван тухаççĕ. Фотографи умĕнче урамра тата шалта та портретсен витрини çакăнса тăрать. Унта çакнă ÿкерчĕксем пĕтĕмпех хăйсем ÿкернĕскерсем.

Кадăрсем çинчен кунта ĕç аванах пымасть-ха. Акă ĕçри чи кирлĕ çын—пĕр фотограф çитмест. Тепĕр çитменлĕх вăл —фотографин ĕçлемели пÿлĕмсем çитменни. Ушкăнпа ларса ÿкермели зала ик-виç уйăх хушши йусаççĕ ĕнтĕ. Анчах халĕ те туса пĕтермен-ха.

С. Воробйов.

Опытник Т. В. Василйев

Çĕнĕ кулътурăсем лартса тăвассишĕн

Тĕштырăсем çеç мар, колхозсенче акса тăвакан културăсем пурте кăçал пысăк тухăçлă пулчĕç Пирĕн колхоз темиçе çултанпа ĕнтĕ кăнтăр йенче лартса тăвакан пахча-çимĕçсене—арбуз, помидор, дыңă тата ыттине те лартса тăват.

Пĕлтĕр пирĕн колхоз 0.60 гектар çинче 150 центнер арбуз туса илчĕ Арбузсенчен 75 проценчĕ лайăх пиçсе çитрĕç. Хамăр колхозра тунă арбузсене епĕр Чăваш республикĕнчи Советсен Чрезвычайлă 11-мĕш сиесĕ тĕлне уçăлнă выставкăна тăратрăмăр. Выставкăра пирĕн арбузсене курнă хыççăн, нумай колхозсем хăйсем те арбуз акса тума шухăш тытрĕç. Ман патăма арбуз вăрри ыйтса çырусем йама пуçларĕç. Иртнĕ хĕлле епĕ 80 колхоза арбуз вăррисем тата вĕсене мĕвле акса тумали çинчен çырусем йарса патăм.

Пирĕн колхозра кăçал та арбуз пит аван пулчĕ. 0,3 гектар çинчен епĕр 80 центнер арбуз пухса илтĕмĕр. Çав шутран: 70 проценчĕ пит аван пиçсе çитрĕ, 20 проценчĕ чухрах пиçрĕ, 10 проценчĕ пиçсе çитеймерĕ.

Арбузсем пит шултра пулчĕç. Мĕн пур арбузсенчен 10 проценчĕ кашни 6-шар килограм тайрĕç Рекордлă участкăран 500 тв. метр çинчен, 6000 арбуз туса илтĕмĕр, вĕсем вăтам шутпа кашни 4-шар килограм тайрĕç. Гектар çине куçарсан вăл пĕр гектартан 480 центнер пулаť йе 12000 арбуз. Кашни арбуза пĕрер тенке сутсан та гектар çинчи арбуз 12 пин тенкĕ пама пултараť Арбуза епĕр тырпула акса тума йурăхлах мар çĕр çине акса тунине шута илсен, арбуз акса тунипе сăртлă ахаљ выртакан вырăнсенчен те çав тери пысăк тухăç илме май пурри лайăх курăнса тăраť.

Пахча çимĕç тăвас ĕçе пуçласа йама расхут нумай тухмаcť пулин те ку ĕçĕн тупăшĕ пит пысăк. Пирĕн колхоз кăçал пахча-çимĕçне 25000 тенкĕлĕх сутрĕ. Çур гектар çинче 200 центнер (1200 пăт) пулчĕ, ăна пирĕн колхоз 1.000 тенкĕлĕх сутрĕ. Купăста гектартан 500 центнер тухрĕ. Мĕн пур пахча-çимĕç 450 лав пулчĕ. Çакан чухлĕ пахча-çимĕçĕ тунине çителĕклĕ шутласа, лăпланса ларас тесе шухăшламастпăр епĕр. Çитес çулта пахча-çимĕçсене 50000 тенкĕлĕх туса илесшĕн. Агротехникă кăтартăвĕсене пурне те пурнăçа кĕртсе, пур ĕçе те тăрăшса ĕçлесе, епĕр çитес çулта

арбуз гектартан	480	центнер
помидор „	500	„
купăста „	700	„
хăйар „	500	„

туса илес задачă лартатпăр. Хамăр умма лартнă задачăсене епĕр пурнăçа кĕртетпĕрех тесе шанатпăр. Пахча-çимĕçĕ лартмали çĕр лаптăкĕн çуррине 50 сантиметр тарăнĕш тислĕкпе çемĕçтернĕ. Тислĕкпе торф—пахча-çимĕçĕ лартмали çĕре çемĕçтерме чи паха йапаласем. Пирĕн колхоз çĕре çемĕçтермели йапаласене тивĕçлĕ хаклама пĕлет. Тислĕке епĕр урамран та пуçтаратпăр, ăна уйа йе пахчана кăларатпăр, тĕрлĕрен куракçенчен компост тăватпăр, кĕл пуçтаратпăр, темиçе 100 лав çерем купаласа, ăна тислăк шывĕпе сапса çĕртетпĕр. Çапла епĕр çĕре çемçетмелисене май килнĕ таран ытларах хатĕрлеме тăрăшатпăр.

Пахча-çимĕçне йăран çине кăларса лартсан та пăхса ўстерме пĕлес пулаť. Кăçал ийунĕн пуçламĕшĕнче сивĕ çăмăр пулнипе нумай колхозсенчи хăйарсем тата помидорсем шăнса пĕтни пулкаланă. Ăшă çĕрти ўсентăран пулса тăракан арбузшăн ку сивĕ çăмăр сийенлĕ пулсан та, епĕр арбузсене аван сыхласа хăвартăмăр. Арбуз çеçкисене йăран çине каларса лартсан сивĕ лекесрен витме епĕр хĕллех темиçе çĕр пĕчĕк йешчĕксем туса хатĕрлерĕмĕр. Йешчĕксене çўхе хăмаран урлăшне те, тăрăшне те 30-шар сантиметрлă, çўлĕшне 25 сантиметрлă, кантăк тĕплĕ турăмăр. Сивĕ кăçсенче епĕр арбузсене çав йешчĕксемпе витет тĕмĕр. Иртнĕ çуркуннехи сивĕ çăмăртан епĕр арбуза çав йешчĕксемпе витсе сыхласа хăвартăмăр. Йешчĕкпе витмен арбуз çеçкисене сивĕ тиврĕ. Çапах та пĕр икĕ ерне маларах кăларса лартнă арбуз çеçкисем пĕтмерĕç, чĕрĕлчĕç, сивĕ çăмăр умĕн çеç кăларса лартнисем пĕр 300 тĕп пĕтрĕç.

Арбузсем лартнă вырăнта епĕр пĕр çумкурăкне те ўсме паман, çĕрне çу. каçиччен 5 хут кăпăшкалатса йаланах кăпăш тăратнă Арбуз чечеке лариччен епĕр ăна икĕ хут тислĕк шĕвекĕпе сапрăмăр, арбузĕсем чăмăртана пуçласан тата тепĕр хут кашни арбуз тĕпне пĕрер витре сапрăмăр.

Çапла ĕçлесе епĕр пысăк тухăçлă арбуз туса илтĕмĕр.

Пысăк тухăçлă арбуз туса илес ĕçре лайăх сурт суйласа илесси те пит пысăк вырăн йышăнса тăраť. Пирĕн вырăнта „стакса“ йатлă сурт час пиçет, вăл пит хĕрлĕ, сахăр пек тутлă пулаť. Хуппи унăн тĕттĕм симĕс, вăрри вĕтĕ. „Любимец“ йатлă сурт та час пиçет, хĕрлĕ пулаť, анчах вăл нумай выртаймасť, унăн ăшĕ нўнекеленсе кайаť. Ку суртăн та хуппи тĕттĕм симĕс. Çакăнтах каласа хăварас пулаť: епĕ сăнанă тăрах, пирĕн вырăнта хура хупăлă арбузсем хăвăртрах пулса çитеççĕ. Шупка симĕс хупăлă, питĕ чăтăмлă „Мурашка“ сурт та 6 килограм таран ўсет. Вăл вăтам хĕрлĕ пулаť. Пиçсе çитме ăна 100 кун кирлĕ.

Хамăр йалта епĕ 10 çултанпа ĕнтĕ арбуз лартса сăнавсем тăватăп. Епĕ хамăн опыта, хамăр колхозри çитĕнўсене пытарса усрасшăн мар, пирĕн республикăри ытти колхозсене те сарасшăн, вĕсене пысăк тухăçлă арбуз тата ытти пахча-çимĕçсене туса илме пулăшасшăн. Çавăнпа епĕ ытти колхозсемпе çыру тăрăх та тата ытти майсемпе те çыхăну тытасшăн. Халиччен арбуз акса тăвакансене те епĕ хăйсен сăнавĕсем, çитĕнĕвĕсем çинчен çырса пĕлерме ыйтатăп.

Чăваш республикĕнчи колхозсенче пуринче те арбуз акса тума тытăнмала. Арбуз пулаймĕ тесе хăраса тăмали çук, арбуз пулатех. Килес çул арбуз акма халех хатерленмеле.

„Красная Чувашия“ колхоз, Тăвай районĕ.

Колхозсене тупăш валеçес ĕçре пулăшу кирлĕ

Вăрмар районĕнчи колхозсенче тупăш валеçесси йапăх пыраť. Ку таранччен районĕпе те пĕр Çĕнĕ Веренерти колхоз çеç валеçсе пĕтернĕ. Тата районри çĕрĕç пайĕпе МТС Пăвапа Атнаш йалĕсенчи колхозсен тупăш валеçмели планĕсене çирĕплетнĕ. Ытти нумай колхозсенче çак пысăк политикла хуçалăхлă ĕçе çине тăрса туни çук.

Акă Мăн-Çыма, Çĕнĕ-Кавал, Кивĕ-Вăрмар, Йампай, Чубай, Кавал йалсовечĕсенчи колхозсем халĕ те аван çапса пĕтермен. Районри çĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем каланă тăрăх аван çапас ĕç ку колхозсенче тепĕр вунă куна пымала. Тырпула пухса кĕрес ĕçе тĕрĕс организацилесе вăхăтра туманни халь ĕнтĕ тупăш валеçес ĕçе чарса тăраť.

Тата аван çапса пĕтернĕ нумай колхозсенче ревизи вăхăтра туманнипе, правлени начар ĕçленипе халиччен те тупăш валеçес ĕçе пуçăнман.

Сăмахран, Карăк-Çырминчи Киров йулташ йачĕпе тăракан колхозра Семенов бригадир колхозниксен ĕçкунĕсене вăхăтра çырса пымасăр ĕçе пăтраштарса йанă. Колхозсенче ревизи вăхăтра туман пирки кун пек тĕслĕхсем тата ытти çĕрте те пур.

Районри çĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем колхозсене тухса çўресе вĕсене тупăш валеçмели плансем тума конкретлă пулăшмаççĕ. Вĕсем районти çĕрĕç пайĕн кабинечĕсенче ларса колхозсенчен план çирĕплетме килессе çеç кĕтсе лараççĕ.

Колхозри тупăша валеçесси пысăк политикла ĕç. Çавăнпа та ку ĕçе çине тăрса, ĕçри мĕн пур çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерсе пырса туни кирлĕ.

Кăçал районри нумай колхозсенче колхозниксем ĕçкунĕ пуçне çуршар пăт тырă илеççĕ. Колхозра тăрăшса ĕçленĕ хыççăн вĕсене тивĕçлĕ тыррине вăхăтра памала.

Ф. Çитта.

Çамрăксем пĕр-пĕринпе хутшăнаççĕ

ЙЕТĔРНЕ. Тури Ачакри „Крестьянская газета“ колхоз клубĕ çумĕнчи драмкружок çулран-çул вăйланса пыраť. Ўсет кружок членĕсен пултарулăхĕ, çитĕнеççĕ çынсем.

Драм коллектив йалта ĕçленисĕр пуçне, кўршĕри йалсене тухса çўрет. Нумай пулмасť Тури Ачак çамрăкĕсем Шăматри „Ударник“ колхоза пырса „Айдар“ пйесăна лартса пачĕç. Колхоз клубне 300 çын ытла пухăнчĕ. Шăмат колхозникĕсем спектакăле пысăк хавaслăхпа пăхса ырларĕç.

Спектакăљ пĕтнĕ хыççăн, сценă çине „Крестьянская газета“ колхоз хорĕ тухрĕ. Хор „Çывăхран та çывăх Сталин“, „Песня о родине“, „Ан авăн, шĕшкĕ“, „Çырма хĕрне ансассăн“, „Çĕнĕ çул йурри“, „Йарăм-йарăм йарапи“ тата ытти йурăсене йурласа пачĕ. Колхоз хĕрĕсем сценă çинче çăмăллăн йарăнса, илемлĕ сăвă каласа ташланă чух:—Кам пăхса ўстернĕ-ши ку йаш-кĕрĕме?—тесе тĕлĕнсе ларчĕ ватă колхозник М. Афанасйев.

Шăмат çамрăкĕсем Тури Ачак çамрăкĕсене хавaслăн йсатса йачĕç, малала тата çаван пек килсе паха спектакăљсем лартса пама чĕнчĕç.

С Важоров.

Автомобил ĕçне вĕренетпĕр

„Самољот“ колхозри (Шупашкар районĕ) çамрăксем автомобил ĕçне вĕренмели кружок организацилерĕç. Кружока комсомолецсемпе сойузра тăман çамрăксем пĕтĕмпе 23 çын çыраннă.

Кружокра 190 сехет вĕренмеле. Занятисем ернере виçĕ хутчен пулса иртмеле. Ку таранччен икĕ занятти туса иртернĕ ĕнтĕ.

Кружока А. Бычовпа Микушкин шоферсем йертсе пыраççĕ.

А Йердуков.

Хусанта В. И. Ленин музейĕ уçнă (Ленин урамĕнчи 38-мĕш №-лĕ çуртра). Унта Ульйановсен семйи 1888 çулхи сентабĕр уйăхĕнчен пуçласа 1889-мĕш çулхи май уйăхчен пуранна.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: В. И Ленин музей çуртĕнче ĕлĕк столовăй пулнă пўлĕм. Столовăйран Марийă Александровнă, Марийа Илйинична тата Олъгă Илйинична Ульйановсем пуранна пўлем куранаť.

(Сойузфото).

Йереванри Крупскайа йачĕпе тăракан шкулта вĕрентекен учительницă Аруçак Аветовна Хачикйан. Ăча Йереванри пригороднăй суйлав округĕ тăрăх Национальнăçсен Советне депутата суйланă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Хачикйан йулташ хăйĕн хватерĕнче урока хатĕрленет.

(Сойузфото).

Шупашкарти „Художник“ ертелĕнче

Чăвашпромсойуз системине кĕрекен „Художник“ ертел 1933 çултанпа ĕçлет. Ертел халиччен хăйĕн планне нихăçан та тултарса пыман. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлана тĕле, сталинла декадăна хутшăнса, хăйĕн 1937 çулхи планне декаберĕн 12-мĕшне 108 процент тултарчĕ. Ертелри уйрăм стахановецсем: Петров, Матвейев, Зайцев,— хăйсен планĕсене 200-шер процент тултарса пычĕç. Вĕсем кашни уйăхра 350 тенкерен пуçласа 500 тенке çити ĕçлесе илеççе.

„Художник“ ертелре пĕтĕмпе 16 çын ĕçлет. Вĕсен шутĕнче ăста художниксем, хай тĕллĕн вĕреннĕ художниксем, рекламă çыракансем ĕçлеççĕ. Ку ертел пур организацисем валљи те вывескăсем, рекламăсем, художествăлă плакатсем, сăнўкерчĕксем, картăсем, вĕренмели пособисем, диаграммăсем тата ыт.те туса параť. Заказ панă организацисем хăйсен заказĕсене илнĕ чух ĕçĕн пахалăхĕ питĕ аван тесе йышăнаççĕ.

Иртнĕ уйăхсенче ертелре скулъптура тăвас йенĕпе ĕçлекен мастерской пурччĕ. Анчах çак мастерской валљи Чăвашпромсойуз ĕçлемели выран тупса памасăр пĕтерсе хучĕ.

Рабочисем валљи кунта хĕрлĕ кĕтес тунă, унта хаçат-журналсем, шашкă-шахмат, биллиард тата ытте пур. Кунта ĕç хыççăн рабочисем хăйсен пушă вăхатне културăлă иртереççĕ. Художиниксем хушшинче техникăлă вĕренўве пуçарса йанă. Художниксем занятисене пĕрсиктермесĕр çўреççĕ. Хăйсен пĕлўне ўстерес шутпа 2 художник каçхи художествă студине вĕренме çўреççĕ.

Ертелĕн çитменлĕхсем те нумай. Ĕçлекенсем хушшинче културăлă-массăлă ĕçе çителĕклĕ йертсе пымаççĕ. Ертелри кулътработник хăйĕн ĕçне планпа туса пымасť. Хаçат-журналсем вуласа памасť, йутçĕршывсенчи лару-тăру çинчен пĕрре те каласа ăнлантарман.

Правлени ертел членĕсем мĕнле пурăннипе интересленмен: Акă Матвейев стахановецăн пурăнмали хватер условисем йапăх. Анчах ăна хватер тупса парас тесе правлени шутласа пăхман.

Ертелĕн тепĕр пысăк çитменлĕхĕ вăл — ĕçлемели вырăн çитменни, аван мастерской çукки. Художниксем пĕр чул çурт подвалне вырнаçнă. Вĕсен кунĕпех електрицă çутипе ĕçлеме тивет. Ĕçлемели вырăнсем таса мар, хĕсĕк. — Мĕншĕн сирĕн квалификацилĕ работнисем сахал?—тесе ыйтсан, „кун пек çерте ĕçлесшĕнех мар“ тесе ответлеççĕ. Ĕçлемели мастерской çуккине Чăвашпромсойуз та аван пĕлет. Анчах çĕнĕ, çутă мастерской тупса парас йенĕпе „Художник“ ертеле кирлĕ пулăшусем паман.

Ертел членĕсен ĕçлес, вĕренес ĕмĕчĕ пысăк. Вĕсем скулъптурă искусствине тăрăшса вĕренесшĕн. Чăвашпромсойузăн скулъптура тумали мастерскойне туса лартма ертел правленине пулăшу памала.

С. Воробйов.

Йĕлтĕрçĕсем пысăк похода хатĕрленеççĕ

СЕНТĔРВАРРИ. Вăрман ĕç техникумĕнче вĕренекен студентсем физкултурăпа çар ĕçне йуратаççĕ. Кунта темиçе физкултурă команди, çар ĕçне вĕренмели тĕрлĕрен кружоксем организациленĕ. Çак вĕренў çулĕнче 11 ача „ГТО“ значокĕ, 16 ача Ворошилов пек тĕл перекенсен значокне илнĕ, 48 ача „ПВХО“ нормине панă. Çуллахи вăхăтра уçă хирте тактикăла занятисем туса иртернĕ.

Халĕ студентсем йĕлтĕрçĕсен командисем организацилерĕç. Техникумăн 100 мăшăр йĕлтĕр пур. Кăçал йĕлтĕрпе 500 çухрăма çити каймали поход туса иртерме палартнă. Студентсем похода кайма хатĕрленеççĕ, куллен тренировкă тăваççĕ.

Н. Архипов.

Тĕн çĕрĕмĕ тата социалисăм строителстви

Патша вăхăтĕнчи Российа ĕççынисемшĕн чăн-чăн тĕрме вырăнĕнче пулнă. Експлоататерсем ĕçхалăхне пур майсемпе етем тўсейми пусмăрта тытнă.

Хресченсем хăйсен пĕчĕк татăк çĕр çинче туса илекен тырă-пулăпа, апат-çимĕçпе ахăрса пурăнакан харампырсене пинĕ-пинĕпе тăрантарса усранă, хăйсем тарçă вырăнне йулса, выçăла-тутăлă пурăннă.

Хресченсем чиркўсемпе монастырсенчен те сахалах курман хурлăхне. Чиркўсемпе монастырсен аллинче темĕн чухлĕ çĕрсем, вăрмансем пулнă. Сахал çĕрлĕ, йе пачах çĕрсĕр тăрса йулнă хресченсен ирĕксĕрех çав çĕрсемпе вăрмансене çĕрулпучĕсенчен, чиркўсенчен, монастырсенчен хаклă хакпа тара илсе пурăнмала пулнă Хресченсен нушине çак фактсем те лайăх кăтартса параççĕ: 1916 çулта, революциччен пĕр çул малтан, Российăра сахал çĕрлĕ, йе пачах та çĕрсĕр хресченсен шучĕ 20 мĕлйун килрен иртнĕ.

Çĕре авалхи меслетсемпе ĕçлесе пыни, йе ăнсăртран килсе тухнă инкек-синкек хресченсене час-часах выçça тăратса хăварнă.

Çутçанталăк уменче вăйсăр пулнă, çĕр ĕçĕнче авалхи меслетсемпе ĕçлесе пурăнакан хресченсем мĕн пур пек хĕнхура, инкек-синкеке турăран килет тесе шутланă. Вĕсем турра, унăн ангелĕсене, райа, тамăка, шуйттана ĕненсе пурăннă.

Çав курăнман йапаласене ĕненме вĕсене тĕттĕм пурнăç нумай пулăшса пынă. Патша таврăшĕсем, çĕр улпучĕсем, капиталиссем хресченсене йуçри тĕттĕм пурăнăçпа пурăнтарма тăрăшнă. Вĕреннĕ хресчен вĕсене хирĕç тăрассине вĕсем лайăх пĕлсе тăнă. Çавăнпа та вĕсем хресченсем хушшинче хупахсем, чиркўсем нумайтарах уçма тăрăшнă. Хресчен ачисем, вĕренсен те, йалти шкултан мала кайайман. Шкулта пуп вĕрентнĕ. Унăн вĕрентĕвĕ ăслăлăх çинчен мар, турăпа тĕрлĕрен светуйсем, райпа тамăк çинчен пулнă.

1917-мĕш çулти Октăберте рабочисемпе хресченсем пĕр пулса, коммуниссен партийĕ йертсе пынипе, буржуазипе çĕр улпучĕсен влаçне çĕмĕрсе тăкрĕç Вĕсен влаçĕ вырăнне пролетари диктатурине туса хучĕç.

Октăбĕр революци пулнăран вара, иртнĕ 20 çул хушшинче, пирĕн çĕршыв хăйĕн сăнсăпатне тĕппренех улăштарчĕ. Ун çинчен Сталин йулташ Коммуниссен партин XVII сиесĕнче тунă докладĕнче çапла кăтартса хăварнă:

„Паразитла классене пĕтерни çынна-çын експлоатацилессине пĕтересси патне илсе çитерчĕ. Рабочисемпе хресченсен ĕçне експлоатацирен хăтарнă...

...Кулак пусмăрĕ пĕтнĕ хыççăн йалта чухăнлăх та пĕтрĕ. Кирек мĕнле хресчен те, колхозник йе уйрăм хуçалăхлă хресчен, вăл хăй ĕçлеме тăрăшаť пулсан, найанланмасť, çапкаланса çўремест, колхоз пурлăхне çаратмасť пулсан,—çын пек пурăнма тивĕç тупрĕ.

Експлоатацийе пĕтерни, хулара ĕççĕрлĕхе пĕтерни, йалта чухăнлăха пĕтерни,—çаксем вĕсем ĕçхалăх пурнăçĕнче чи „демократилĕ“ буржуалă государствăри рабочисемпе хресченсем ĕмĕтленме те пултарайман историйĕ çитĕнўсем пулаççĕ...

Тата та ытларах йал сăн-сăпачĕ улшăнчĕ. Кивĕ йал, чи курăнакан вырăнта—чиркў, малти вырăнта—урйадник, пуп, кулак пурăнакан лайăх пўртсем пулнă йал, кайри вырăнти хресченсен ишĕлсе аннă пўрчĕсем ларнă йал—пĕтме пуçларĕ. Ун вырăнне çĕнĕ йал ўсет. Ку йалта обчăлăхпа хуçалăх хуралчĕсем, ку йалта клубсем, радио, кино, шкулсем, библиотекăсем, йаслĕсем, ку йалта тракторсем, комбайнсем, молотилкăсем, автомобилсем. Хисеплĕ çын вырăнĕнче шутланнă кулак-експлоататор, ростовщик-йунсăхан, усламçă спекулянт, пуп, урйадник йышши кивĕ сăнсăпатсем пĕтрĕç. Халъхи хисеплĕ çынсем—колхозсемпе совхозсенче, шкулсемпе клубсенче ĕçлекенсем, аслă тракториссемпе комбайнерсем, уйхир ĕçĕпе выљăх-чĕрлĕх бригадирĕсем, колхоз уйхир ударникĕсемпе ударницисем пулаççĕ“.

Совет Сойузĕнчи рабочи класпа совет хресченĕ пĕтĕмпех çĕнĕ çынсем, експлоатацирен ĕмĕрлĕхе хăтăлнă çынсем пулса тăчĕç.

Социалисăм строителстви пирĕн çĕршывра тĕн çĕрĕмне тымарĕ мĕнĕпех кăкласа пăрахрĕ. Експлоататорсен класне пĕтерни—Совет çĕршывĕнче тĕн çĕрĕмĕн тымарĕсене аталантарса, сарса пыма пулăшакан сăлтавсене пĕтерни пулаť. Хамăр çĕршывра ĕççĕрлĕхе пĕтерни, ăна индустрилесе, хăватлантарса пыни, йалхуçалăхне коллективлă çулпа аталантарса, çĕнетсе пыни, ĕçхалăхĕн политикăпа културлăхĕ хăпарса пыни, унăн пурнăçĕ лайăхланса, йусанса пыни—çаксем вĕсем пурте халăх хушшинче тĕн йăлисене хавшатса, тĕне хирĕç ĕçлессине çирĕплетсе пыраççĕ.

Октăбĕр революцин малтанхи кунĕсенчех рабочисемпе хресченсен массисем тĕн çĕрĕмĕнчен уйрăлса, ушкăн-ушкăнĕпе турра хирĕç кĕрешекен ушкăнсене кĕрсе ĕçлеме тытăнчĕç.

Анчах та, пирĕн çĕршыври ĕçхалăхĕ тĕн çĕрĕмĕнчен пĕтĕмĕшпех сивĕнсе çитнĕ теме çук-ха. Капла шутлани вăл питĕ те тĕрĕс мар, политикăла питĕ те пысăк йанăш туни пулĕччĕ. Капиталисăмăн йулашкийĕсем пурнăçра та, çынăн ăстăнпуçĕнче те пĕтĕмĕшпех пĕтмен-ха.

Пирĕн хушăмăрта çакăн пек шухăшлакансем те сахалах мар-ха: „Йалта кулаксене пĕтертĕмĕр, колхоз строителстви çĕнтерсе çитерчĕ. Тĕн çинчен, кун хыççăн, ытава çирĕп лартма кирлĕ-ши вара? Ĕçхалăхĕ хăй ытнипех чиркўсене хупрăмăр; хупаймасăр йулна чиркўсене ватă карчăксем кăна çўреççĕ; çамрăксем турра ĕненмеççĕ. Çапла вара, тĕн йăли хăйех пĕтсе пыраť. Мĕншĕн тĕне хирĕç пропагандăна сарса пымала?“

Кун пек шухăш вăл пĕрре те тĕрĕс мар, питĕ те сийенлĕ шухăш. Тĕп йăли, йалсенче çеç мар, хуласенче те, хăшпĕр пысăк предприйатисенче те йăлтах пĕтмен-ха. Клас тăшманĕсем çавна лайăх шута илсе тăраççĕ. Çавăнпа та вĕсем, политикăпа културă йенчен кайарах тăрса йулнă елементсем хушшинче çине тăрса ĕçлеме тăрăшаççĕ, социалисăм строителствине чăрмантарма тăраççĕ. Кирек йепле тĕн те социалисăм строителствине хирĕçле, сийенлĕ йапала пулса тăраť. Ĕçлев çинчен тăракан ытăвах илер. Ĕç обществă тытăмĕнче тĕп вăй пулса тăраť. Ĕç Совет Сойузĕнче пысăк чап та хисеп вырăнĕнче шутланаť. Совет Сойузĕнче ударничествăпа стахановла йухăм кунрах кун сарăлса пыраť. Ку вăл Совет Сойузĕнчи ĕçхалăхĕ ĕçе чĕререн йуратнине пĕлтерет.

Ĕç çинчен тĕн йăлтах урăхла вĕрентет. Тĕн вĕрентнипе „ĕç вăл—турă ылханăвĕ“, „ĕç вăл—етем çылăхĕсемшĕн турă йана пысăк наказани“.

Пирĕн лозунг: „Кам ĕçлемест—вăл çимест!“ А тĕнĕн йăлтах урăхла. „Ыранхи куншăн ан тăрăшăр; кайăк пек пурăнăр; кайăк—ни сухаламасť, ни акмасť, ни вырмасť“. Пирĕн çĕршывра чи йатлă, чаплă çынсем—стахановецсем, ĕç паттăрĕсем. Тĕн вĕрентни тăрăх ĕç турă пана наказани пулаť!

Ăслăлăх ытăвне илер тата. Коммуниссем ăслăлăх пулăшмасăр социалисăмла обществă тума çук тесе шутлаççĕ. Ленинпа Сталин ăслăлăхăн пур майĕсемпе те усă курмасăр социалисăм тума çук, революцилĕ теорисĕр революцилĕ практикă та пулма пултараймасť, тесе цĕрре кăна асăрхаттарман. Тĕн йăлтах урăхла вĕрентет. Вăл вĕрентни тăрăх, нимĕнле ăслăлăх та кирлĕ мар; мĕншĕн тесен, пурте турăран килет пулаť. Тĕн вăл, ăслăлăха кăна мар, мĕн пур вĕренĕве хирĕç пыраť. „Чухăн пурăнакансем телейлĕ—вĕсене çўлти патшалăх пулĕ“—тесе вĕрентет. Ку çĕр çинче чухăн пурăнма тăрăш, ан ĕçле, ан вĕрентени пулаť. Акă мĕне вĕрентет тĕн çĕрĕмĕ рабочисемпе хресченсене! Кунран та сийен мĕн пулма пултараť тата вара? Етемлĕх историнче етемлĕхĕн тăва тивĕçлĕ ывăл-хĕрĕсем тĕрмесенче, казаматсенче, ссылкăсенче, мăйкăчсенче сахал пĕтнĕ-им вара тĕне хирĕç пырса ăслăлăхшăн ĕçленĕшĕн?

Акă тата хĕрарăм ытăвне илер.

Октăберти Социалисăмла Аслă революци хĕрарăма арçынпа пĕртан права пачĕ. Хĕрарăм пирĕн çĕршывра государствă, хуçалăх, културă руководствинче палла вырăнсем йышăнса ĕçлет. Коммуниссен партипе Совет правителстви хĕрарăмсем çине ĕлĕкхи пек пăхакансемпе нимĕн хĕрхенмесĕр кĕрешсе пыраççĕ. Халь пирĕн çĕршывра социалисăм тăвас ĕçре хĕрарăм малти ретре пыраť.

Тĕн хĕрарăмсем çине йăлтах урăхла пăхаť. Тĕн вăл хĕрарăмсене арçынсемпе пĕртан шутламасť Хĕрарăм, тĕн вĕрентнĕ тăрăх, „арçын чури—урăх нимĕн те мар“.

Çакăнта кăтартнă пур тĕслĕхсем те тĕн сийенлĕ йапала иккенне, реакцилĕ йапала иккенне лайăх кăтартса параççĕ. Тĕн вăл капиталисăмăн йулашкисене пурнăçра та, ăспуçра та асра тыттарса, социалисăм строителствине кансĕрлесе пыракансенчен пĕри.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ тĕн çĕрĕмĕпе кĕрешессине партин тĕп задачисенчен пĕрин вырăнне хурса, ку ĕçпе партире тăман болъшевиксен те, партире тăракан болъшевиксен те чăн-чăн болъшевикла ĕçлесе цымала.

1938 çулта майракалă шултра выльăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентермели план

ССР Союзĕн Çĕрĕç халăх комиссариачĕ 1938 çулта майракалă шултра выльăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентермели план çирĕплетнĕ. Колхозсен, колхозниксен тата йединоличниксен выльăхесене искусственнăй майпа 1.500 пин пуç пĕтĕлентерме палартнă, вăл шутран Украинăра—140 пин пуç, Воронеж облăçĕнче—76 пин, Краснодарск крайĕнче—70 пин, Омск облăçĕнче—55 пин, Казах СС Республикинче, Ростов облăçĕнче—50-шар пин пуç т. ыт.

Çак кирлĕ ĕçе иртерме 6 282 пункт организациленĕççĕ. Çĕрĕç халăх комиссариачĕ çĕрĕç органĕсене йанварĕн 1-мĕш тĕлне кивĕ пунктсене оборудовани туса çитерме тата йусаса пĕтерме, çĕнĕ пунктсен строительствине—1938 çулхи мартăн 1-мĕшне туса пĕтерме хушнă.

Колхозсем майракалă шултра выльăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентермели пунктсене хăйсен укçи-тенкипе тăваççĕ, кирлĕ пулсан нумай çруклăха кивçен илеççĕ.

Çĕрĕç органесен 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕнчен кайа йулмасăр ăратлă вăкăрсене зоотехникăпа ветернари йенчен тĕреслесе тухса, искусственнăй майпа пĕтĕлентермели пунктсем çумне çирĕплетсе памала. Пунктсем çумне планпа ĕрчетме палăртнă ăратри чи лайăх, сывă вăкăрсене, чи малтан мĕнле йăх хăварнине тĕреслесе пăхнă вăкăрсене çеç çирĕплетмеле.

(ТАСС).

Çĕнĕ çул йолкисем

Хальхи вăхăтра кашни ача, шкула кайат-и вăл, ача садне-и, йаçлĕне çўрет-и—„дед Мороз" çинчен калаçат. Çĕнĕ çула вĕсем хаклă хана пек кĕтеççĕ, хатĕрленеççĕ.

Ача апше-амĕшĕсем магазинсем тăрах йолкăна илемлетмели хатĕрсем шыраса çўреççĕ. Анчах магазинсенче нимĕн тупса илме те çук-ха.

Шупашкар хулинчи комсомол магазинĕ енер Атăл лешйенне йалама чăрăшсем касма çынсем йачĕ. Декабĕрĕн 18-мĕш тĕлнеле магазинта йолкă сутма тытăнаççĕ. Тата çак кунсенчех йолкăна илемлетме Мускавран 25 тĕслĕ ачапăча выльамали йапаласем кўрсе килеççĕ. Çăлтăрсем, прожекторсем, çурлапа малатук, кайăк кĕлеткисем, кантăк сăмаварсем, кофейниксем, т. ыт. те пулаççĕ. Пĕтĕмпе 23 пин те 700 тенкелĕх илсе килеççĕ.

Каçал йолкă капăрлатмали, йапаласен хакне чылай йўнетнĕ.

1938 çулшăн хаçат çырăнтăмăр

Ваçкассинчи Илйич йачĕпе тăракан йалхуçалăх ертел членĕсем (Елĕк р.) 1938 çулшăн пурте хаçат çырăнса илчĕç. Колхозниксем патне çĕнĕ çултан пуçласа „Чăваш Коммунĕ" 15 екземпльар, „Çамрăк большевик" 12 екземпльар, „Колхозник йалавĕ" т. ыт. хаçат-журналсем те нумай килсе тăма пуçлаççĕ.

Ив. Маркелов.

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче етемлĕхĕн чи аслă генийĕ В. И. Ленин хăйĕн Кремĕлри кабинетĕнче йулашки хут ĕçленĕ кунранпа 15 çул иртрĕ.

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: В. И. Ленинăн Кремĕлри кабинечĕ (В. И. Ленинăн Центрти музейĕ).

Новицки фото-ўкерчĕкĕ (Сойузфото).

Укçа-тенкĕ планне Чăваш АСС Республикĕнче мĕнле тултарса пынине кăтартакан СВОДКĂ

(IV-мĕш квартăл, декабĕрĕн 1-мĕшне)

Район йачĕсем	Плана тултарнă (процентпа)
Шупашкар хули	92,6
Вăрнар	69,1
Сĕнтĕрвăрри	66,3
Улатăр	64,3
Шăнкăртам	63
Çĕмĕрле	62,6
Улатăр хули	62,1
Çĕрпў	62
Йелчĕк	60,7
Канаш	59,6
Елĕк	59,4
Трак	58,4
Пăрачкав	58,3
Йетĕрне	58,2
Кувакинă	58
Тутаркас	58
Куславкка	56
Шупашкар	55,4
Тăвай	54,3
Хĕрлĕ Чутай	54
Йĕпреç	52,3
Вăрмар	51,6
Ишлей	51,1
Турхан	50,9
Шăхасан	50
Патăрйел	47,9
Шăмăршă	44,2
Пĕтĕмпе	59,2

Чăвашла календарсем хăçан хатĕр пулаççĕ?

Тепĕр икĕ ернерен çĕнĕ çул, 1938-мĕш çул çитет. Кĕнеке магазинĕсемпе киосксенче вырăсла календарсене таçсанах сутма пуçланă ĕнтĕ. Чăваш государствă издательстви те апрел уйăхĕнчех чăвашла календарсем кăларма тытăннă. Анчах халь те сутлăх çук. Чăвашгизăн производствă пайĕн пуçлăхĕнчен—Лунев йулташран чăвашла календарсем хăçан хатĕр пуласси çинчен ыйтса пĕлнĕ хыççăн, çапла ответлерĕ:

— Чăвашла календарсем çинчен хаçат çине çырма кирлĕ мар, мĕншĕн тесен феврал уйăхĕнче тин хатĕрлесе çитеретпĕр...—терĕ.

Чăвашгиз работникĕсем хăйсем феврал уйăхĕнче хатĕрлесе çитерме шантараççĕ пулсан, епĕр вĕсене хăйуланах тепĕр 2—3 уйăх хушса пама пултаратпăр. Çапла вара чăвашла календарсем май уйăхĕнче тин сутлăх пулĕç.

48 ача ПВХО значокĕсем илчĕç

ЕЛĔК. Йўçкассинчи вăтам шкулта вĕренекен ачасем тĕрлĕрен кружоксем организацилерĕç. Кружоксенчен уйрăмăнах ПВХО (руководителĕ Бушуйев), ГСО (руководителĕ Григорйева) тата стрелковăй (руководителĕ Анисимов) кружоксем аван ĕçлеççĕ.

Иртнĕ кунсенче 48 ача ПВХО значокĕсем илчĕç. Кунсăр пуçне çак кунсенчех вĕсем ГСО, ГТО, ВС значоксен нормисене те парса пĕтереççĕ.

Кашни вĕренекен ача виçĕ оборонă значокĕ илме задачă лартнă.

Маркелов.

„При проверке..."

Умсăмах çырса вăхăта тăсма кирлĕх те мар. Епĕр унпа нимĕн те тумастпăр. Тўрех, вĕрентсен упа та ташша вĕренет, тенĕ сăмахран Сĕнтĕрвăрри районĕнчи çĕрĕç пайĕ Шуршăл участкинчи Василий Кириллов агронома актсем çырма вĕрентнинчен пуçлатпăр.

61-мĕш номерлĕ хут. Çак хута Сĕнтĕрвăрри райçĕрĕç пайĕнчен кăçалхи нойабĕрĕн 25-мĕшĕнче çырса йачĕç. Унпа пĕрле Мерчен çырнă заметкă тата вăл заметкăна тĕрĕсленĕ акт.

Апрелĕн 30-мĕшĕнче Сĕнтĕрвăрри райçĕрĕç пайне 205-мĕш номерлĕ хутпа „Колхозник йалавĕ" хаçат тĕрĕслеме йанă заметкă пырса кĕрет.

Вăл заметкăра „Магазри „Октабĕр" колхоз çуракине пахалăхсăр турĕ. Машинăпа акнă сĕлĕ шапшурă çийелте выртат, типсе кайнă. Сухалассине çийелтен шăйăрттарнă. Вăрлăхĕсем пахалăхсăр. Уй хире хаçат тухмаст. Ăмăрту курăнмаст. Правлени колхозниксене ĕçе тухма чарса тăрат"—тесе çырнă пулнă.

Шуршăл участкинчи В. Кириллов агроном çураки туса пĕтерсен, çуртырри шăтса тухса пуç кăларсан, тырпул шăркана ларса пиçме тытăнсан, тырпул пухса кĕрсе аван çапса пĕтерсен, тупăша ĕçкунĕсем тăрăх валеçсен, шупшурă йур çуса сивĕ кунсем çитсен, нойабĕрĕн 21-мĕшĕнче, заметкă тĕрĕслеме паравоз пек хашлатса çитет.

— Вот,—тет,—правлени членĕсене тупăр. Халех чĕнсе килĕр. Есĕр çураки начар иртернĕ. Безобрази!..

— Ан калаç ĕнтĕ,—тет правлени председателĕ И. Владимиров,—çураки аван иртсе кайрĕ. Тырпул та лайăх пухса кĕнĕ. Авăн та çапса пĕтернĕ. Тĕрĕслесе пăх. Ăçта унта пахалăхĕ начар? Ăçта унта шăйрăк сухаланă? Ăçта унта ăмăртмасăр ĕçлени?

— Апла-тăк, çыратпăр акт. Кăтартăпăр ак: „При проверке оказалось указанные в заметке, целиком неправильные".

Ку акт айне пĕр агроном, хай епĕр каланă Кириллов, колхоз председателĕ Владимиров, правлени членĕ Кузьмин, колхозăн ревизи комиççи членĕ Гурйев, колхоз бригадирĕ Йаковлев алă пусса, çĕрĕç пайĕнчи тимсĕр çынсен аллине параççĕ.

Шухăшлăр ĕнтĕ: апрел уйăхĕнче панă заметкăна 7 уйăх иртсен кăна тĕрĕслесе тухрĕç. Ăçтан вара унăн тĕрĕслĕхĕ палăртăр-ха? Çакăнтан Сĕнтĕрвăрри райçĕрĕç пайĕнче ĕççынисен жалăбисем çине çийелтен пăхни лайăх паларат. Районти прокурорăн жалăбăсене райçĕрĕç пайĕнче мĕнле тĕрĕсленипе интересленсен питех ырă пулĕ тетпĕр. Ахалĕн йаланах вĕсем заметкăсене пĕрер çул иртсен кăна тĕрĕслесен, вĕсен тĕрĕслĕхне кăтартмĕç.

Ив. Мосейев.

Тĕрĕсленĕ заметкăсем

★ „Колхоз тыррине сутса ĕçет" йатлăлатса йанă заметкăра Йефимов йалкор Вăрнар районĕнчи „Комсомолец" колхоз председателĕ Павлов колхоз тыррине сутса ĕçни, колхозниксĕм хушшинче ĕç дисциплинине йапăхтарни, колхоз пурлăхне йухăнтарни тата колхоз укçине 1023 тенкĕ салатни çинчен çырнăччĕ.

Заметкăна ПСК(б)П Вăрнар райкомĕнчен вырăна тухса тĕрĕсленĕ хыççăн, редакцине парти райкомĕн секретарĕ çакăн пек çырса пĕлтерчĕ: „Заметкăра çырнă фактсем пĕтĕмпех тĕрĕс. Павлова колхоз председателĕнчен кăларса суда панă. Халăх сучĕ ăна 4 çуллăха тĕрмене хупмала суд тунă".

★ Тутаркас районĕнчи Кашмашри вулав çурчĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ Бычкова вулав çурчĕн ĕçĕсене йапăхтарнăшăн, кĕнекесем сутса ĕçнĕшĕн ĕçрен кăларнă хыççăн, райсутĕç пайĕнчен ун вырăнĕнче ĕçлеме Шумилова хушнă. Вăл та вулав çуртĕнче йĕркелĕ ĕçлемест, вулав çурчĕ йаланах хупнă ларат, тесе çырнăччĕ Йаковлев йалкор.

Тутаркас районĕнчи Сутĕç пайĕнчен вăл заметкă пирки çакăн пек пĕлтерчĕç: „Заметкăра автăр çырнă фактсем тĕрĕс. Бычкова суда панă. Шумилова ĕçрен кăларнă. Вулав çуртĕнчи ĕçсене лайăхлатассипе мерăсем йышăннă".

★ Исайев йалкорăн „Халăх тăшманĕсене тата вĕсене пулăшакансене тымарĕпех кăкламала" йатлă заметкине редакци тĕрĕслеме ЧАССР Сутĕç Халăх Комиссариатне йанăччĕ.

„Заметкăна вырăна тухса тĕрĕсленĕ. Заметкăра çырнисем тĕрĕс. Вĕренекен ачасем хушшинче националисла шухăш сарнăшăн тата вĕсенчен мăшкăланăшăн Патăрйалĕнчи педучилищăра вĕрентекен Кушникова ĕçрен хăтарнă, ответ тыттарма ĕçне суд аллине панă", тесе пĕлтерчĕ ЧАССР Сутĕç Халăх Комиссариатĕнчен Трофимов йулташ.

★ Трак районĕнчи Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозра çемйелĕх çавăрса илнĕ. Пĕр-пĕрин çитменлĕхĕсене тăрă шыв çине кăларас вырăнне пытарса, витсе пыраççĕ. Иртнĕ çулта колхоз пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ Овчиников 141 тенкĕ колхоз укçине сапусани) колхозниксене ĕçкунĕпе валеççе памалли 100 çурăм кантăра çĕртсе йанă, 398 тенкĕ колхоз укçине хăйĕн кăсйине чикнĕ. Колхоз счетоводĕ Орлов, Кольцовпа пĕрле ĕççе-çисе пуранăскер, 398 тенкĕ укçана Кольцовран шыраса илмесĕр тăнă. Афанасйевпа (колхоз кассирĕ) Григорйев (сăм арман заведуйушчийĕ) колхоз укçине 133 тенкĕ салатса йанă. Григорйевăн аслă ывăлĕ Кротов Гавриловпа пĕр шухăшлă пулса колхоз утине вăрласа кĕнĕ. 2 лав колхоз вуттине тийесе кĕрсе çунтарнă. Шывраман пуçлăхĕ Иванов кĕреçе тыррин 9 пăта йахăн прихолламасăр хăварнă. Копейкин завхозăн 19 пăт тыра тухман. Çавăн пекех редакцине ĕне фермин пуçлăхĕ Семенова сĕт-çу укçине 130 тенкĕ салатса йани çинчен çырнă çыру килнĕччĕ.

Трак районĕнчи прокурор пĕлтернĕ тăрăх, заметкăра çырнă фактсем пĕтĕмпех тĕрĕс пулнă. Салатнă укçа-тенке, тырпула шыраса илнĕ. Колхозниксен пухувĕ Овчинникова, Кольцова, Орлова, Афанасйева, Григорйева, Степановăна, Копейкина тата Гаврилова хăйсен ĕçĕнчен кăларнă. Правлени составне çĕнĕрен шанчăклă колхозниксене суйланă.

Октабĕрĕн 3-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕ" хаçатра „Чашлама колхозĕ çинчен" йатлă заметкă тухнăччĕ. Заметкăра колхоз пурлăхне йухăнтарни, лашасене начар пăхни, колхозниксен хушшинчи дисциплинăна йапăхтарни тата ыттисем çинчен те çырнăччĕ Соловйов йалкор.

Заметкăна Куславкка районĕнчи çĕрĕç пайĕнчен вырăна тухса тĕрĕсленĕ. Заметкăра йалкор çырнă фактсем тĕрĕс пулнă. Заметкăна колхозниксен пухăвĕнче сўтсе-йавнă хыççăн, колхозри çитменлĕхсене пĕтерессипе мерăсем йышăннă. Ĕçке йарăнса колхоза хирĕçле пынăшăн, уйчен раскулачит тунăскерсене, Москвинпа Порфирйева колхозран кăларнă. Чашлама колхозĕ çинчен райĕçтăвком президиумĕнче сўтсе-йавнă хыççăн, колхоза ĕçре практикăлă пулăшусем парса пыма районри активран комиççи уйăрса колхоз çумне çирĕплетнĕ.

Театр

„Без вины виноватые"

Декабĕрĕн 14-мĕшĕнче Чăвашсен государствă академи театрĕнче вырăс труппи А. Н. Островскин „Без вины виноватые" йатлă драмине выльаса пачĕ.

„Без вины виноватые"—вырăссен чаплă классик-драматургĕ Островский çырнă чи вайлă драмăсенчен пĕри. Пйеса 1880 çулсенчи патша Российĕн провинцири купецсем пуçпулса тăракан тĕттĕм хула пурнăçне кăтартса парат.

Е. В. Калинина артисткă Кручинина рольне питĕ паха выльарĕ. Л. И. Козоровицкий артист та ĕмĕтсĕр çатмах, тискер купец Муров рольне тĕрĕс кăтартса пачĕ. Григорий Незнамов ролĕнче выльакан Б. А. Соколов артистпа Шмага ролĕнче выльакан Б. И. Праудин артист та пйеса куракансене хытă килĕшрĕç.

С. С. Мартагин режиссерпа Е. Н. Сапожников художник спектакăле лайăх йĕркеленĕ.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Чăваш АСС Республикĕнчи

„ЗАГОТКОНЬ" КАНТУРĔ

мĕн пур хуçалăхсене, строителствăсене, совхозсемпе колхозсене асра тытма çакна пĕлтерет:

1938 çул валли договорлă условисемпе лаша туртăм вăйĕ тăратма 1927 çулхи нойабĕрĕн 25 мĕшĕнчен пуçласа договорсем тума тытăннă.

Лашасене кирлĕ таран илес тесен, çўлте асăннă организацисен 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшчен кайа йулмасăр договорсем тумала. Договор тума йаракан представителсене доверенăç тата лаша илме кредит пурри çинчен Госбанк уйрăмĕ панă справкă парса йамала.

Договор тăвас ыйтусем тăрăх тата хăйсен лашисене сутас текен организацисемпе колхозсен сĕнўсемпе „Заготконь" организацин Чăваш республикĕнчи кантурне, Улатăр хулине пымала.

„Заготконь" кантур начальникĕ ХРУЦКИЙ.

ИККĔМĔШ ПЙАТИЛЕТКĂ (ТĂВАТТĂМĔШ ÇУЛХИ КĂЛАРĂМ) ЗАЙОМНЕ ÇЫРĂННИСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

Иккĕмĕш пйатилеткăн (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) зайомĕн облигацийĕсене ĕçленĕ вырăнта алла илейменнисене, предпрйатисен тата учрежденисен бухгалтерийĕсем, çавнашкалах йалсовечĕсем перекет кассисене таварса панă. Вăл облигацисене илме çырăннă çынсем çумне çирĕплетмен.

Çавăнпа та зайом илме çырăннисем, вăл облигацисене хăйсен аллине иличчен, малали выльавсенче шута кĕреймеççĕ.

Иккĕмĕш пйатилеткă (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) зайомне илме çырăннă граждăнсем, облигацисене алла илейменнисем, хăйсем çырăннă тăрăх облигацисене районри перекет кассинче илме пултараççĕ. Облигацисене алла илме рабочисем тата служăщисем предпрйати йе учреждени бухгалтеринчен зайомшăн мĕн чухлĕ тўлев хывнине кăтартакан справкă илсе тăратмала. Колхозниксен тата уйрăм хуçалăхлă çынсен зайом укçине хывнине кăтартакан расчот квитанцине тăратмала.

Иккĕмĕш пйатилеткă (4-мĕш çулхи кăларăм) зайомне çырăнса илнисен облигацисене перекет кассинче АЛЛА ИЛМЕЛИ ЙУЛАШКИ СРОК 1938 ÇУЛХИ ИЙУНĔН 1-МĔШĔ.

Государствă Перекет Кассисен тата Государствă Кивçенлĕхĕн Тĕп Управленийĕ.

Чăвашсен йуридически шкулне географи тата матаматикă тăрăх преподавателсем кирлĕ.

Çак адреспе пымала: Шупашкар хули, Карл Либнехт урамĕ, 14-мĕш № çурт.

ДИРЕКЦИ.

2—1

Шупашкарти 1-мĕш № Типографине економист-плановик тата статистик кирлĕ.

Адрес: Пичет çурчĕ.

Ĕçукçи килĕшў тăрăх.

ШУПАШКАРТИ ТОРГ-ăн АПАТ-ÇИМĔÇ УЙРĂМĔ

Тир-сăран завочĕн çуртĕнче (Ворошилов урамĕ)

ÇĔНĔ СТОЛОВĂЙ УÇНĂ.

Пурте пырса апатланма пултараççĕ. Хаксем вăтам.

Столовăй ирхине 8 сехетрен пуçласа 23 сехетчен уçă.

ЧĂВАШТОРГĂН ШУПАШКАРТИ ÇĂКĂР ПĔÇЕРЕКЕН ЗАВОДНЕ лаборантсем кирлĕ.

Условисем килĕшў тăрăх.

Çăкăр пĕçерекен заводăн кантурĕнче ыйтса пĕлмеле, Ленин урамĕ, 11-мĕш № çурт.

„Чăваш Коммунĕ" Издателствине вăхăтлăха 4 уйăх ĕçлеме бухгалтер помошникĕ КИРЛЕ.

Çак адреспе ыйтмала: Шупашкар, Пичет çурчĕ, виççĕмĕш хутлăх, 18 пўлĕм.

Чăвашснабсбытăн Транспорт кантурне вăхăтлăх ĕçлеме 1 бухгалтер йалан ĕçлеме 1 бухгалтер КИРЛĔ.

Ĕçукçи государствă нормировани йĕ тăрăх.

3—2

Канашри Главширпотреб магазинĕн (малтан Точмашсбыт пулнă) електричествăлă клавишăлă-шутламали машинăсем СУТЛĂХ ПУР

ХАКĔСЕНЕ ЙЎНЕТНĔ—

3940 тенкĕ вырăнне 1775 тенкĕ

Клавишăлă шутламали машинăпа ĕçлеме (арифмометрпа тайлаштарсан) çăмăлтарах, хăвăртрах тата тĕрĕс пулат. Ку машинăпа ĕçлекен пĕр çын—арифмометрпа ĕçлекен виçĕ çын ĕçĕ чухлĕ лайăххăнах ĕçлесе пыма пултарат.

Клавишăлă шутламали машинăпа ĕçлеме питĕ çăмăл. Шут ĕçне туса пыракан кашни работник чи кĕске вăхăтрах ку-машинăн ĕç техникине вĕренсе çитме пултарат.

Машинăсене 12 уйăхлăх гарантипе параççĕ.

Главширпотреб.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмелли хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 959 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2601. Тираж 13780. 58—92 см. 1—1 п. л.